25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 МАРТ 5 КĔÇНЕРНИКУН 54 (6079)-мĕш №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Колхозсен ăмăртăвне вăйлатар

Большевикла çуракине çулсеренех тĕплĕн хатĕрленсе, ăна кар тухса ирттересси пирĕн ĕнтĕ çирĕп йăлана кĕнĕ. Çураки—уйхир ĕçĕсен пуçламăшĕ. Çуракине хатĕрленнĕ чухне тата ăна ирттернĕ çĕрте çĕкленнĕ хавхалану, малашнехи уйхир ĕçĕсенче ӳссе пырса, пире çулсеренех кĕркунне пысăк тупăшсем, пуян çимĕçсем парса пынă. Çуракин питех те кĕске тапхăрĕнче мĕн тумаллине туса ĕлкĕрейменнишĕн кайран çулталăкĕпех ӳпкелешмелле ан пултăр тесен, пирĕн çак енĕпе мĕн тума кирлине халех, паянах, çине тăрсах тумалла. Ĕçчен çын ĕçе нихăçан та ырана хăвармасть. Кая юлсан каю шăтать, теççĕ ваттисем.

Кăçалхи çул уйхир ĕçĕсен ответлăхĕ уйрăмах пысăк. М. И. Калинин юлташ, хăйĕн çак кунсенче пичетленсе тухнă статьинче, тырпул тăвас ĕçе пысăк вырăна хурса, боеприпассемпе хĕçпăшал туса кăларакан производствăна çеç унпа танлаштарма пулать, тесе каларĕ. Çапла ĕнтĕ тырпул пирĕн çĕршыва отечественнăй вăрçăн хаяр кунĕсенче хĕçпăшалпа боеприпассем пекех кирлĕ. Вăрçă хирĕнчи боец, тылри рабочи, колхозник—вĕсем пурте тăван çĕршыв оборонин малти позицине йышăнса тăраççĕ.

Çакна лайăх ăнланса илнĕ колхозниксемпе колхозницăсем, колхозсемпе совхозсен, МТС-сен, партипе совет органĕсен руководителĕсем çуракине хатĕрленес ĕçе тахçанах, иртнĕ кĕркуннех тытăннă та, халĕ ĕнтĕ вĕсем çак ĕçе вĕçлесе çитернĕ, хăйсем мĕн тунине татах та тепĕр хут пăхса тухаççĕ, тĕрĕслеççĕ, çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтереççĕ. Вĕсем хăйсем лайăх ĕçленине кăна ырлахмаççĕ, хăйсен кӳршисем, хăйсемпе ăмăртакансем мĕнле ĕçленипе те интересленеççĕ.

Çакăнтан ĕнтĕ ăмăртакан колхозсемпе совхозсен, МТС-сен пĕр-пĕрин ĕçне пăхса туса тĕрĕслесси пуçланса каять. Çак тĕрĕслӳ вăл план тăрăх мартăн 15-мĕшĕнчен пымалла. Кунпа пĕрлех районсенче мартăн 10-мĕшĕнчен çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе малта пыракансен канашлăвĕсем пулса иртеççĕ. Çак мероприятисене пирĕн вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек тĕплĕн те йĕркеллĕн, ытлашши сăмах вакламасăр туса ирттермелле. Пĕр-пĕрин ĕçне тĕрĕслесе тухса актсем çырасси е канашлура сăмахсем тухса каласси мар, çуракине хатĕрленес ĕçри чăн-чăн çитĕнӳсемпе çитменлĕхсене, вĕсен сăлтавĕсене палăртасси, малта пыракансен опычĕсемпе ыттисене паллаштарасси, кая юлакансене мала тухма пулăшасси, ĕçри чăн-чăн ăмăртăва çĕнĕ вăй кӳрсе хăватлантарасси,—çакă пулса тăрать ĕнтĕ тĕрĕслӳпе районсенчи канашлусен тĕп задачи.

Çуракине хатĕрленнĕ май, кăçалхи Хисеп хăми çине пуринчен малтан Ишлей МТС-ĕ кĕчĕ. МТС коллективĕ, тракторсен паркне февралĕн 1-мĕш тĕлне юсаса çитернипе пĕрлех, хăйпе ăмăртакан Сĕнтĕр МТС-ĕ çуракине мĕнле хатĕрленнине те пăхса тухса тĕрĕслерĕ. Ишлей МТС-ĕн политотдел начальникĕ Степанов, МТС механикĕ Мазяров юлташсем, Сĕнтĕр МТС-не пырса, унти тракторсен паркне кашни вак-тĕвек япала патне çитиччен тĕплĕн пăхса тухнă. Кунта 53 трактортан 29-шне юсанă, актра вĕсене лайăх юсанă, тесе йышăннă. Анчах тимлĕн пăхакан куç курма тивĕçлине куратех. Çитменлĕхсене палăртасшăн кăна мар, çав çитменлĕхсене палăртса ĕçе тухиччен пĕтерме пулăшасшăн тăрăшать чăн-чăн ĕçшĕн çунакан çын. Юсанă 29 трактортан Сĕнтĕр МТС-ĕнче 18 тракторăн 3—4-шар деталь çитмест. 20-мĕш номерлĕ тракторăн, сăмахран, тормозĕ çук, фарăсен кантăкĕсене лартман, рульне юсаман тата ыт. те. Ку трактора юсанă пулнă, анчах ăçта кайма пулать тормозсăр, лайăх рульсĕр тракторпа? Çакăн пекех ытти тракторсен те. Паллах, кунта Сĕнтĕр МТС-ĕн руководителĕсем тракторсене юсас ĕç çине çиелтен пăхни сисĕнет.

Тӳрех каламалла, пĕр-пĕрин ĕçне тĕрĕслессине, ĕççыннисен çак паха пуçарулăхне, халĕ районсенче питех те çителĕксĕр ертсе пыраççĕ-ха. Чылай çĕрте ку ĕç хăй тĕллĕн, стихийăллă пулса пырать. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, сăмахран, республикăри МТС-сем пĕр-пĕрин ĕçне тĕрĕслени çинчен материалсем пухать, çав вăхăтрах ку тĕлĕшпе колхозсенче ĕç мĕнле пынипе сахал интересленет.

Малта пыракансен районри канашлăвĕсенче тата çуракине мĕнле хатĕрленнине пĕр-пĕрин хушшинче тĕрĕсленĕ çĕрте чи малтан кадрсемпе ĕç планĕсем пирки, вăрлăхпа туртăм вăйĕ пирки ыйту тăмалла.

Çак ыйтусем мĕн тери ответлă пулни каламасăрах паллă. Кадрсем тĕлĕшпе илсессĕн, кăçалхи çул хăшпĕр районсем паха ĕçсем турĕç. Район центрĕнчи служащисене, ялсенчи учительсемпе вăтам шкулсен юлашки класĕсенче вĕренекенсене организацилесе трактор ĕçне, агротехникăна вĕрентрĕç. Хĕрсенчен чылай трактористкăсем хатĕрлерĕç. Анчах çав çынсен практикăллă опыт çук-ха. Кĕске вăхăтпа усă курса, вĕсемпе хĕрсех практикăллă занятисем ирттермелле; вĕсенчен кашниех трактор çине ларса çуракине хăй тĕллĕн тухма пултартăр.

Ялхуçалăх ĕçĕсенче ытти çулсенче те хĕрарăм пысăк вăй пулса тăнă пулсан, кăçал вăл татах та пысăкрах вырăн йышăнса тăрать. Вĕсене пирĕн хăюллăнах ответлă ĕçсене куçарса пымалла. Халех ĕç планĕсене туса çитерсе, кашни ĕçлеме пултаракан çынна хăйĕн вырăнне лартмалла, кашни çын çумне ĕç хатĕрĕсемпе участоксене çирĕплетсе памалла.

Юлашки вăхăтра республикăри колхозсене çĕнĕ вăйсем хутшăна пуçларĕç. Единоличниксем, çак ответлă самантра хăйсем мĕнпур ĕççыннисемпе пĕр шухăш-кăмăллине кăтартса парса, колхоза кĕреççĕ. Çак кунсенче Етĕрне районĕнчи Чурпайри Киров ячĕпе тăракан колхоза çĕнĕрен 13 хуçалăх, Урапакассинчи «Правда» колхоза 2 хуçалăх, Ишлей районĕнчи Ишек колхозне 2 хуçалăх, Октябрьски районри Буденный ячĕпе тăракан колхоза 2 хуçалăх кĕнĕ. Çĕнĕ колхозниксене çийĕнчех ĕçе вырнаçтармалла, колхоза илес енĕпе малалла та ĕçлес пулать.

Республикăри колхозсем çуртьрри вăрлăхĕсене пурте пекех çителĕклĕ таран уйăрса хунă темелле. Ку тĕлĕшпе халĕ чи пысăк ыйту — çав вăрлăхсене пăхса усрасси, вĕсене тасатса, сортласа хурасси, вĕсен пахалăхне çийĕнчех тĕрĕслесе тухасси пулса тăрать. Уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла çĕрулми вăрлăхĕ çине. Халĕ пуçланнă тĕрĕслӳре вăрлăхсен хисепĕпе пахалăхĕ мĕнлине яр-уççăн палăртмалла.

Малта пыракан колхозсем пур тĕлĕшпе те паха пуçарулăх кăтартаççĕ. Туртăм вăйĕ çителĕксĕррине шута илсе, чылай колхозсем хĕсĕр ĕнесемпе вăкăрсене ĕçе вĕрентме тытăнчĕç. Çакă вăл питĕ паха пуçару, унпала пур çĕрте те усă курмалла.

Тĕрĕслӳпе канашлусенче малта пыракансен ĕç опычĕсемпе паллаштарнипе пĕрлех, чи малтан ĕçри çитменлĕхсене палăртса, вĕсене пĕтермешкĕн мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене мобилизацилемелле. Çитменлĕхсем, тумасăр юлнă ĕçсем пирĕн сахал мар-ха. Лайăх ĕçлекенсемпе юнашарах тепĕр чухне питех те кая юлса пыракансем те пур. Сăмахран, Калинински районри «Социализм» колхоз çуракине хатĕрленме тытăнман та темелле. Кунта плугсене пĕрине те юсаман, сӳресем çителĕксĕр, иртнĕ çул кĕраки тунă чухне вĕсене хирех пăрахса хăварнă. Кӳлмелли таврашсем япăхса çитнĕ пирки, лашасен çурăмĕсемпе мăйĕсене пăсса пĕтернĕ. Колхоз хуçалăхне çакăн пек япăхтарса янăшăн колхоз председательне П. Краснова ĕçрен кăларса, колхозниксем питех те тĕрĕс тунă.

Колхозсем халĕ пĕр-пĕрин ĕçĕсене тĕрĕслесе тухса, социализмлă ăмăртăван çĕнĕ договорĕсене тăваççĕ. Парти райкомĕсемпе МТС политотделĕсен, çĕрĕç органĕсемпе вырăнти советсен çак ĕçе ертсе пымалла. Договорсенче конкретнăй обязательствăсем, чĕрĕ ĕçсемпе чĕрĕ çынсем пулма тивĕçлĕ. Колхозсен ăмăртăвне татах та ытларах вăйлатас ĕçре республикăри Хисеп хăми пысăк вырăн йышăнса тăрать. Анчах парти райкомĕсемпе МТС политотделĕсем тата райсовет исполкомĕсем хăйсен районĕсенчи колхозсемпе колхозниксене мала кăларассишĕн, вĕсене Хисеп хăмине кăтартса парассишĕн çителĕксĕр тăрăшаççĕ.

Республикăри Хисеп хăми çине кĕме тивĕçлĕ пулни колхозниксемшĕн питех те пысăк чыс, хисеп пулса тăрать. Çакăншăн кашни колхозăн, кашни МТС коллективĕн ăмăртса ĕçлемелле.

Пирĕн аслă çулпуç Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне панă приказ фронтри боецсен çапăçури геройлăхне, тылри ĕççыннисен хастарлăхне татах та ытларах çĕклерĕ. Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пуçланнă ăмăртăва колхозсемпе колхозниксем хушшинче çĕнĕ вăй-хăват кӳрсе вăйлатар. Кăçалхи чи ответлă та йывăр çуракине тĕплĕн хатĕрленсе, нихăçанхи пек мар йĕркеллĕ, организованно ирттерер!

ЯЛХУÇАЛĂХ МАШИНИСЕН ПАЙĔСЕНЕ ПУХАÇÇĔ

КУКЕÇ. МТС-ри комсомолецсемпе çамрăксем ялхуçалăх машинисене юсама кирлĕ пайĕсене хĕрсех пухаççĕ. Ку ĕçпе ĕçлеме ятарласа икĕ бригада организациленĕ.

Паянхи куна 86 трактор гильзи, 54 подшипник, 53 поршень, кайри пĕр шестерня, 18 коленчатый вал, 5 радиатор варри, 5 распределительный вал, передачăсен коробкин шестерийĕсем тата валĕсем 11 [illegible] тата ытти тĕрлĕ машинăсен 199 пайне тупса пуçтарнă.

МТС-ра ялхуçалăх машинисен пайĕсене, инвентарьсемпе металсене пухас ĕç пысăк ăнăçлăхпа пулса пырать. Ялхуçалăх машинисен пайĕсене пухакан бригадăсен бригадирĕсем А. Орловăпа П. Александров юлташсем [illegible] пуçтарса, ĕçре паха примерсем кăтартса пычĕç.

И. В.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 3-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Мартăн 3-мĕшĕнче пирĕн войсксем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç тăмалла [illegible] пĕтерсе, [illegible] çапăçнă. Фронтăн хăшпĕр участокĕсенче пирĕн чаçсем малалла куснă.

Мартăн 2-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче противникăн 8 самолетне персе ӳкернĕ тата аэродромсенче 52 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пĕтĕмпе çак кун нимĕçсен 60 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 11 самолет пĕтнĕ.

* * *

Мартăн 2-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен войскисемпе грузсем тиенĕ 300 автомашинине, 14 орудие, [illegible] пассем тиенĕ 90 [illegible], зенитлă пулеметпа 7 точкине, 5 минометне пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, боеприпассен 5 складне сирпĕнтерсе янă, чугунçул çинчи 23 вагонпа 3 паровоза аркатнă, противник пехотине 2 батальон ытла сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен пирĕн чаçсем икĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 10 ДЗОТ-не, 14 блиндажĕпе землянкине ишĕлтерсе аркатнă, трофейăсем нумай тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче противник 2.000 виле пăрахса хăварнă.

* * *

Калинин фронтĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем юлашки кунсенчи çапăçусенче тăшманăн 96 ДЗОТне аркатса тăкнă, нимĕçсенне 124 автомашина, 15 миномет, 42 автомат, 4 оруди, 27 пулемет, 3.800 граната, 1.657.000 винтовка патронĕ, 4 радиостанци тытса илнĕ. Пирĕн боецсем противникăнне тĕрлĕ япаласемпе продовольстви 4 складне, боеприпассен 2 складне пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1.400 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

Сурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем [illegible] 4 танк, 18 оруди, 2 миномет, 10 станковăй тата ручной пулемет, 35.000 винтовка патронĕ, 73 автомашина [illegible]. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсен 650 çынна пĕтерсе тăкнă.

Хĕвеланăç фронтĕн участокĕсенчен пĕринче [illegible] салтакĕсемпе офицерĕсен 200 виллине пăрахса хăварнă.

* * *

Нимĕçсен 56-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 192-мĕш полкăн штаб ротинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Вильгельм Вальтер çапла каласа панă: «Нимĕç войскисем хăйсем тытса илнĕ районсенчи мирлĕ халăха вĕлерсе пĕтереççĕ. Çакна Германи командованийĕпе Гитлерăн приказĕ тăрăх тăваççĕ. Пире хамăрăн шухăш-кăмăлсене пурне те пусарса лартса мирлĕ халăха нимĕн шеллемесĕр вĕлерсе пĕтерме хушнă. Эпĕ карательнăй отрядăн пулеметчикĕ пулнă, çавăнпа та çирĕплетсех çапла калама пултаратăп: эпир нимĕн айăпсăр мирлĕ халăха пере-пере пăрахаттăмăр».

* * *

Мартăн 3-мĕшĕнче нимĕçсен информаци бюровĕ Ленинград фронтĕнче нимĕç парашютисчĕсем тунă юмахри пек çĕнтерӳ çинчен виçесĕр суйса пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă. Гитлерла суеççĕсем этемĕн мĕнпур шухăш-сисĕмĕсене çухатса çапла каласа сӳпĕлтетеççĕ: «Нимĕçсен парашютпа анса юлнă чаçĕсем 6 эрне хушшинче большевиксен 16 атакине сирсе пăрахнă, çакăнта большевиксен 12 дивизине аркатса тăкнă» пулать. Çак суя сăмаха чăнласа кăтартас тесе, гитлеровецсем хăйсем аркатса тăкнă текен совет дивизийĕсене пуçа пырса кĕнĕ цифрăсемпе номерсем парса тухнă. Çак пĕлтерӳре пĕр сăмах та чăнни çуккине Ленинград фронтĕнче кĕрешекен совет боецĕсемпе командирĕсем лайăх пĕлсе тăраççĕ. Анчах çакна гитлерла командовани те лайăх пĕлет. Мĕншĕн тесен фронтăн çак участокĕнче темĕн чухлĕ вăхăт каярах кĕрешнĕ нимĕçсен авиадесантпа антарса хăварнă дивизине фронта пынă хыççăн тепĕр темиçе кунтанах пирĕн войăсем пĕр çын юлмиччен пĕтерсе тăкнă, çапла вара унăн мухтавсăр кунçулĕ пĕтсе ларнă.

Нимĕçсен парашютпа анса юлнă чаçĕсен суя çĕнтерĕвĕсем çинчен гитлеровецсем ухмахла юмахсем сарнин хăйĕн уйрăм тĕллевĕ пур. Чăнах та ĕнтĕ нимĕçсен фашистла войскисен парашютпа анса юлнă çак чаçĕсем халĕ аса-илӳре çеç юлнă-ха. Гитлер хăйне хăй нимĕçсен çарĕн главнокомандующийĕ туса хунăранпа фашистсен войскисем пĕр поражени хыççăн тепĕр поражени тӳссе пыраççĕ. Çакăн пирки те ĕнтĕ Германи информаци бюровĕ, çав мухтавсăр ефрейторăн авторитетне, ĕлĕк те чакнăскере, халĕ Гитлерăн вăрçă планĕсем арканса кайнине пула пачах пĕтсе ларнăскере, тытса тăрас тесе, темĕн те пĕр хăтланса пăхать.

* * *

Смоленск облаçĕнчи Юшково ялĕнче гитлерла мерзавецсем 21 колхозника персе пăрахнă. Персе пăрахнисем хушшинче: А. Решетникова, Н. Фроловпа унăн арăмĕ Ефросинья, вĕсен ывăлĕсем Сергей 17 çулта, Николай 13 çулта, Г. Лапин 2 çулти Коля ятлă ывăлĕпе, М. Решетникова пулнă. Ялти ытти 95 çынна нимĕçсем пĕр çурта хупса лартнă та 7 кун хушши апатсăр-мĕнсĕр тытса усранă. Колхозниксене çак ялтан нимĕç оккупанчĕсене çапса кăларнă Хĕрлĕ Çар боецĕсем ирĕке кăларнă.

Мартăн 4-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Мартăн 4-мĕш ыран теннĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлăн çапăçнă.

* * *

Ленинград фронтĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн боецсем противника хĕссе пырса тăшманăн çирĕплетнĕ огневой точкисене, блиндажĕсемпе землянкисене 50 çити аркатнă, нимĕçсен 2 танкне тата 12 автомашинине çĕмĕрнĕ. Пирĕн боецсем тытса илнĕ трофейăсем хушшинче 3 станковăй тата 19 ручной пулемет пур. Çапăçу хирне гитлеровецсем хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсен 650 виллине пăрахса хăварнă.

* * *

Кĕçĕн лейтенант Рой юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн пехотăн взвочĕ тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсем 60 çынна çити кĕрсе ларнă чул çурта çавăрса илнĕ. Нимĕçсем хăйсен ирĕкĕпе тыткăна парăнма килĕшмен пирки Рой юлташ çав çурта темиçе граната ывăтнă. Çуртран 20 гитлеровец чупса тухнă та тарса хăтăлма хăтланнă, анчах пирĕн боецсем вĕсене пурне те персе вĕлернĕ. Çурт ăшĕнче вилнĕ тата аманнă 40 нимĕç пулнă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕн участокĕсенчен пĕринче юлашки кунсенче уйрăмах Латвин Н-ски чаçĕнчи пулеметчиксем Лациспа Бронис юлташсем паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнă. Лацис юлташ нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 50 çынна, Бронис юлташ 32 çынна вĕлернĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене çапса аркатас ĕçре Смоленск облаçĕнчи халĕ нимĕçсенчен ирĕке кăларнă Износковски районра кĕрешнĕ çамрăк партизансен пĕчĕк групппи Хĕрлĕ Çара активлăн пулăшса пынă. Б. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен группи 5 эрне хушшинче кăна нимĕçсен хĕçпăшалсемпе боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, 1.000 метр телефон проводне татса пуçтарса илнĕ тата нимĕçсен обозĕсем çине темиçе хутчен пырса тапăннă, нимĕçсен 9 автомашинине пĕтерсе тăкнă, 23 салтакне вĕлернĕ.

* * *

Нимĕçсен 17-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 55-мĕш полкăн 8-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Эмиль Венгель çапла каласа панă: «Çак çулăн пуçламĕшĕнче мана маршевăй батальона илчĕç те Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне ячĕç. Батальона питĕ васкаса йĕркелерĕç. Пирĕнпе пĕрле предприятисенчен илнĕ 35—40 çулти рабочисем ытларахчĕ. Вĕсем винтовкăран аран-аран пеме пултаратчĕç, анчах та пулемета пачах та пĕлместчĕç. Батальонра шухăш-кăмăл питĕ пусăрăнчăкчĕ: никам та нихăçан та çавăн пек хăвăрт тата ăнсăртран фронта çитессе кĕтмен. Хĕллехи çипуç никама та памарĕç. Февралĕн 13-мĕшĕнче эпир çапăçăва кĕтĕмĕр. Батальонра пире: кам вырăссем çине пемест, вĕсене офицерсем çавăнтах персе вĕлереççĕ, тесе хăратса асăрхаттарчĕç. Темиçе сехет хушши çапăçнă хыççăн пирĕн батальона аркатса тăкрĕç, мана тыткăна илчĕç».

* * *

Румынсен 1-мĕш дивизийĕнчи 5-мĕш егерски полкăн 2-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Вендер Штефан çапла каласа панă: «Румыни салтакĕсем Гитлерпа унăн шайкишĕн хăйсен пурнăçне парасшăн мар. Салтаксенчен нумайĕшсем тыткăна парăнма лайăх вăхăта çеç кĕтсе пурăнаççĕ. Пире 20 çынна чугунçул çине хурала ячĕç. Хамăрăн постсем патне çитнĕ чух эпир пăшалсенчен пенине илтрĕмĕр. Эпир вырăссем наступлени туса пынине тавçăрса илтĕмĕр. Лейтенант Крикенеску боевой йĕрке йышăнма приказ пачĕ, анчах та унăн приказне никам та пурнăçа кĕртмерĕ. Крикенеску виçĕ салтака персе вĕлерчĕ, ыттисем çывăхри çуртсене пытанса пĕтрĕç те вырăссем çитессе кĕтсе ларчĕç. Часах красноармеецсем пырса çитрĕç. Эпĕ хамăн 16 юлташпа пĕрле хĕçпăшалсене хутăм та аллăсене çĕклерĕм. Халĕ эпир совет войскисем патне тыткăна лекнĕшĕн питĕ савăнатпăр».

* * *

Нимĕçсем оккупациленĕ Европăри çĕршывсенче гитлеровецсем çаратса пĕтернĕ халăх калама çук хĕн-хур курать. Францире халăха çăкăр, аш-какай тата пахча-çимĕçсем пачах та памаççĕ. Юлашки вăхăтра Парижра ачасем ĕлĕкхинчен 29 процент ытларах вилеççĕ. Грецире апат-çимĕç çитмен пирки выçăпа аптăраса кашни кун 1000 çын ытла вилет. Югославире, Голландире тата Норвегире те выçăпа пиншер çынсем вилеççĕ.

* * *

Горькири Молотов ячĕпе тăракан заводри касакан инструментсем тăвакан цехра ĕçлекен Осьмушниковпа Моторин юлташсен бригадисем, Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ чĕнсе каланине ответлесе, кашни кун икшер нормăран кая мар тултарма обязательстве илнĕ. Çак обязательствăна вĕсем чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Солоцухин, Карпов, Земсков юлташсем сменăра 3—4-шар ĕç норми тултараççĕ.

Хĕрлĕ Çарпа СССР Сывлăх Халăх Комиссариачĕн çарти санитарипе лечебнăй учрежденийĕсенчи работниксене наградăлани

СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче аманнă боецсемпе командирсене эвакуацилес тата сыватас тĕлĕшпе хăйсене хăйсем шеллемесĕр кăтартуллăн ĕçленĕшĕн наградăланă:

ЛЕНИН орденĕпе — бригврача **В. И. Попова**, бригаднăй комиссара **М. И. Редькина**, диввpача **Е. И. Смирнова**, 2-мĕш рангри военврача **Г. М. Фрадкина**.

ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе—11 çынна;

ĔÇЛĔХ ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе — 20 çынна;

ХĔРЛĔ ÇАЛТАР ОРДЕНĔПЕ — 132 çынна;

«ЗНАК ПОЧЕТА» орденĕпе — 48 çынна;

«ЗА ОТВАГУ» медальпе — 9 çынна;

«ЗА ТРУДОВУЮ ДОБЛЕСТЬ» медальпе—24 çынна.

«ЗА БОЕВЫЕ ЗАСЛУГИ» медальпе —77 çынна.

«ЗА ТРУДОВОЕ ОТЛИЧИЕ» медальпе—28 çынна наградăланă. (ТАСС).

Хĕрлĕ Çарăн артиллерийĕнчи начальствующи тата хăй ирĕкĕпе кĕрешсе ĕçлекен состава наградăлани

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çав ĕçре паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн, артиллери кадрĕсене хатĕрлес боевой подготовка ĕçĕнче тата действующи армине боеприпассемпе артиллери япалисене тăратас тĕлĕшпе уйрăмах кăтартуллă ĕçленĕшĕн, СССР Верховный Совет Президиумĕн указĕ тăрăх, наградăланă:

ЛЕНИН орденĕпе — артиллерин генерал-лейтенантне **К. Р. Мышкова**.

ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе — подполковника **И. И. Алексеева**, лейтенанта **И. С. Богданова**, 1-мĕш рангри воентехника **В. В Суворова**, артиллерин генерал-майорне **М. М. Чистякова**, артиллерин генерал-майорне — **Б. И. Шереметова**.

ХĔРЛĔ ÇАЛТАР орденĕпе—63 çынна;

«ЗНАК ПОЧЕТА» орденĕпе — 96 çынна;

«ЗА ОТВАГУ» медальпе—2 çынна;

«ЗА ТРУДОВУЮ ДОБЛЕСТЬ» медальпе—56 çынна;

«ЗА БОЕВЫЕ ЗАСЛУГИ» медальпе—1 çынна.

«ЗА ТРУДОВОЕ ОТЛИЧИЕ» медальпе—95 çынна наградăланă (ТАСС).

Хĕрлĕ Çарăн начальствующипе рядовой составне наградăлани

СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, Действующи арми войскисемпе формированисене материально-технически япаласем тăратас тĕлĕшпе командованин заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн наградăланă:

ЛЕНИН орденĕпе—дивизионнăй комиссара **В. А. Баюкова**, бригаднăй комиссара **П. А. Квашина**, технически войскăсен генерал-майорне **И. В. Ковалева**, бригинженера **Б. С. Палеева**.

ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе — 9 çынна;

ХĔРЛĔ ÇАЛТАР орденĕпе—41 çынна;

«ЗНАК ПОЧЕТА» орденĕпе — 33 çынна;

«ЗА БОЕВЫЕ ЗАСЛУГИ» медальпе—8 çынна;

«ЗА ТРУДОВУЮ ДОБЛЕСТЬ» медальпе—8 çынна наградăланă. (ТАСС).

Çуракине большевикла хатĕрленер

Вăйлă тырпулшăн кĕрешеççĕ

ЭЛĔК. Хуравари «Заветы Ильича» колхозра кăçал вăйлă тырпул туса илессипĕн питĕ тăрăшаççĕ. Бригадăсем, звеносем тата уйрăм колхозниксемпе колхозницăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Колхоз çуракине кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттерес тесе, Хитекушкĕнчи «Çĕнĕ çул» колхозпа ăмăртса ĕçлет.

Çуракине хатĕрленнĕ май колхоз уя 550 лав тислĕк кăларнă, 39 центнер кĕл, 19 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Ялхуçалăх машинисемпе ĕç хатĕрĕсене: 29 плуг, 1 сеялка, 45 сӳре, 39 урапа, лаша таврашсене юсанă. Çуркунне акмалли вăрлăха тасатнă, пăрçа вăрлăхне пĕрчĕн суйласа хатĕрленĕ.

Çакăнпа пĕрлех çитменлĕхсем те пурха. Колхоз ку таранах çитсе те минераллă удобренисем кӳрсе килмен, кадрсем хатĕрлемен, ĕç планне туман. Колхозăн çак ĕçсене хăвăртрах туса, çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитмелле.

М. КУСТИКОВ.

Малта пыракан колхозсен примерĕ

ÇĔРПУ. Малта пыракан колхозсем иртнĕ çул çуракине тĕплĕн хатĕрленсе ирттернипе пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç. «Красный бригадир», «Новая жизнь», «Луч» колхозсем уя темиçе çĕршер лав тислĕк, кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ кăларчĕç, минерал çăнăхĕсем нумай сапса çĕре çемçетрĕç. Çапла вĕсем кашни гектартан 15—20-шер центнер тĕштырă туса илчĕç.

Планпа пăхнинчен ирттерсе пысăк тухăçлă тырпул туса илнĕ бригадăсем ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕркепе нумайшар центнер тĕштырă илеççĕ. «Красный бригадир» тĕштырă уй ĕç бригадин бригадирĕ вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе стахановла ĕçленĕшĕн ĕçшĕн хушса 19 центнер тĕштырă илет, «Новая жизнь» колхоз бригадирĕ Тимохин 17 центнер илет, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз бригадирĕ 8 центнер илет.

Асăннă колхозсем кăçал та çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеççĕ. Вăйлă тырпул туса илме хатĕрленеççĕ. Вĕсем авăнсем çапса пĕтернĕ хыççăнах вăрлăхлăх тырăсене уйăрса çийĕнчех сортлама тытăнчĕç. Пăрçа-ясмăк йышши тырăсене алăпа суйласа сортлаççĕ, тулă вăрлăхне «ВИМ» машина витĕр кăларса сортлаççĕ.

«Новая жизнь» колхоз 30 плуг, 7 сеялка юсаса хатĕрлерĕ. «Молодая сила» колхоз уя 200 лав тислĕк кăларчĕ, 20 центнер кĕл пуçтарса хучĕ.

Малта пыракан колхозсенчен пример илсе, районри пур колхозсен те çуракине халех тимлĕн хатĕрленме тытăнмалла. «Путь Ленина», «Канаш», «Авангард» колхозсем уйрăмах çуракине начар хатĕрленеççĕ-ха. Вĕсем вăрлăхлăх тырăсене çителĕклĕ таран уйăрса хуман.

В. ИГНАТЬЕВ.
Çĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Тихасене ĕçе вĕрентеççĕ

ÇĔРПУ. Чăрăш ялсоветĕнчи «Новая сила» колхозра кăçал кашни лашапа 5 гектар сухалама тивет. Лашасен ĕçне çăмăллатас майпа, колхоз правленийĕ 2—3 хĕл каçнă çамрăк тихасене кӳлсе сӳреме вĕрентме йышăнчĕ. Ку ĕçе конюх Семенов юлташ вĕрентет. Семенов юлташ чылай çулсем хушши конюхра ĕçлет. Вăл лашасене пăхма тĕплĕн вĕренсе çитнĕ. Халĕ вăл çамрăк тихасене те йĕркеллĕ вĕрентет.

Г. ПЕТРОВ.

Çĕрулми вăрлăхĕ хатĕрлеççĕ

СЕНТĔРВАРРИ. Академик Д. Т. Лысенко сĕнĕвĕпе усă курса, районри колхозсем çĕрулми тăррине касса хăварса вăрлăх хатĕрлеме тытăнчĕç. Ку ĕçре колхоз председателĕсем колхозниксене пример кăтартаççĕ. Урай-Магасри колхоз председателĕ М. Карпов юлташ апат-çимĕçе куллен каякан çĕрулми тăррине касса пухса сакайне сийĕн-сийĕн тăпра витсе хурать. Çапла вăл халĕ пĕр центнер çĕрулми вăрлăхĕ хатĕрлерĕ. Унăн примерне курса ытти колхозниксем те çапла майпа 10 центнер çĕрулми вăрлăхĕ хатĕрленĕ.

Çавăн пекех «Новая деревня», «Заря», Горький, Ленин ячĕсемпе тăракан колхозсенче те колхозниксем çĕрулми тăррине касса вăрлăх хатĕрлеççĕ.

Пирĕн кăçал çĕрулмине чылай ытларах лартса тумалла. Хăшпĕр колхозсенче çĕрулми вăрлăхĕ çителĕклĕ мар. Çапла халĕ апат-çимĕçе каякан çĕрулми тăррине касса пухса тăпра сийĕпе витсе усрани нумай колхозсене çĕрулми вăрлăхне çителĕклĕ таран хатĕрлесе хума май парать.

А. РАЗИН.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛĂ ВĂРÇĂН ФРОНЧĔСЕНЧЕ

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнчи çапăçусем

Вĕсем тин çеç Германирен килнĕ, çакă вăл вĕсен боевой задании пĕрремĕш хут вĕçсе тухни пулнă. Вĕсене хупăрласа илнĕ нимĕç гарнизонĕ валли продовольствипе боеприпассем парашютпа пăрахса хăварма задани панă. Пирĕн зенитчиксем тĕл персе нимĕçсен самолетне ӳкернĕ те унăн экипажĕн вăрçăри ăнăçлă кун-çулне татса хунă. Акă вĕсем пирĕн умра стрелок Петер Егер, борт-механик Фридеман Шиманен тăраççĕ. Экипажăн виçĕ членĕ самолет ӳкнĕ чухне вилнĕ. Çапла вара вĕсем никăшĕ те тимĕр хĕрес илме тивĕçлĕ пулайман.

Стрелокпа борт-механик допросра каласа параççĕ. Вĕсен фронтăн ку участокĕнче кĕрешмелле пулман иккен. Вĕсен хăйсене çурхи кампанин валли хатĕрлемелле, вĕренӳри практика курсне пĕтермелле пулнă. Вĕсен отрячĕ резервра тăраканскер пулнă. Нимĕçсен командованийĕ хăйĕн опытсăр летчикĕсене мĕн пирки çапăçăва кĕртсе янă-ха?

— Пирĕн виçĕ авиаотряда ситĕ хăвăрт Российăна тухса кайма хушрĕç,— тенĕ Фридеман Шиманен.—Мĕншĕн çакăн пек тунине эпир Российăна çитсен тин пĕлтĕмĕр. Пирĕн чаçсем хурана кĕрсе ӳкнĕ иккен, пирĕн вĕсене пулăшмалла пулнă. Эпир вĕсене ăнăçсăр пулăшнине хăвăрах куратăр ĕнтĕ. Юлашки вăхăтсенче эпир час-часах «хуран» сăмаха илтетпĕр. Ку сăмаха нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем ытларах та ытларах калаççĕ. Çакă ĕнтĕ çавăрса илнине пĕлтерет.

Эпир çӳлерех асăннă самолета Державин генералăн войскисем йышăнса тăракан вырăн тĕлĕнче персе ӳкернĕ. Юлашки кунсем хушшинче фронтăн çак участокĕнче нимĕçсен авиацийĕ, декабрьпе январь уйăхĕсенчипе танлаштарсан, хăйĕн ĕçĕсене чылаях активлăлатнă. Анчах та ку текех ĕнтĕ авиацин наступленийĕ мар, фашистсен инкеке кĕрсе ӳкнĕ полкĕсене çăлас тесе темĕн те пĕр тума хăтлани пулса тăрать. Нимĕçсен летчикĕсем хăйсен çавăрса илнĕ гарнизонĕсем валли боеприпассемпе продовольстви парашютпа пăрахса нама кашни кунах хăтланса пăхаççĕ. Анчах вĕсен нимĕн те тухмасть. Нимĕçсен 16-мĕш армийĕ тавра хупăрласа илнĕ хурçă карта тăвăрланнăçемĕн тăвăрланса пырать. Пирĕн боецсем тăшманăн тылне хăюллă кĕрсе каяççĕ, фашистсен гарнизонĕсене хупăрласа илеççĕ, çулсене татататата хураççĕ, нимĕç оккупанчĕсене пĕтерсе пыраççĕ. Державин юлташăн войскисем шăпах ĕнтĕ çакнашкал ĕçсене туса пыраççĕ.

Ĕнер татах тепĕр операцие ăнăçлăн вĕçленĕ: тăшманăн хирĕç тăмалли çирĕплетнĕ пунктне тавралла кайса çавăрса илнĕ. Çав тери вăйлăн пырса çапнă пирки, операцие çав тери тĕплĕн шухăшласа тунă пирки çакăнта çĕр айне чавса кĕрсе ларнă фашистсенчен сахаллăшĕн çеç чĕррĕн тухса тарма май килнĕ. Нимĕçсем хăйсен хирĕç тăмалли çав пункчĕ çине питĕ пысăк шанчăк хунă. Вĕсем пур çуртсенчен те тенĕ пекех огневой точкăсем туса хунă, пур çулсем çине те минăсем лартса тухнă, тăтăшах персе тăнă. Кунсăр пуçне вырăнĕ хăй те оборона валли питĕ юрăхлă пулнă. Фашистсем кунта çуркуннеччен тытăнса тăма пултарассине шансах тăнă. Анчах та кунта та вĕсем йăнăш тунă.

Кузнецов юлташăн чаçĕ наступлени пуçласа яма приказ илнĕ хыççăн çулсăр-мĕнсĕр йывăр марш тунă. Пирĕн боецсем кĕтмен çĕртен: юр хĕвсе кайнă уйхир, шурлăх урлă, вăрман витĕр пырса тухнă. Çапăçу пуçланса кайнă. Противник питĕ хаяррăн хирĕç тăнă. Вăл пулеметсенчен, минометсемпе автоматсенчен питĕ вăйлăн пеме пуçланă. Тăшманăн юнашарти гарнизонĕсенчи йывăр орудисенчен те пеме тытăннă. Вара кунта пирĕн артиллеристсем хăйсен пултарулăхне кăтартнă. Тăшманăн огневой точкисене вĕсем тӳррĕн тĕллесе персе пĕтере-пĕтере тăкнă.

ЛИВШИЦ.

(«Известия» хаçатран).



ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Хĕвеланăç фрончĕ), **Укерчĕк çинче:** Старши лейтенант Федоров командир пулса ертсе пынипе Н. районĕнче иçене перекен орудин калла чакакан нимĕçсем çине персе тăрать.

Л. ВЕЛИКЖАНИН фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Тăшмана хыттăнрах та хыттăнрах çапатпăр

КАНТАР-ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, (**ТАСС спецкорĕ**). Фронтăн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен Н-ски часть Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă куна тăшмана çине çинех пырса çапнипе паллă турĕ. Тăшман, мĕнле те пулсан хăйĕн рубежĕнчех тытăнса юласшăн пулса, хаярлансах контратакăсем тăвать, тăтăшах артиллерирен пере-пере тапăнать. Анчах та унăн ĕçĕ тухмасть. Пирĕн боецсем, ăна пысăк çухатусем кӳрсе, хĕвеланăçнеллех хĕссе пыраççĕ. Н-ски часть иртнĕ талăксем хушшинче фашистсене халăх пурăнакан 4 пунктран хăваласа кăларчĕ. Çак пунктсене вĕсем йĕри-таврах вăйлăн çирĕплетнĕ пулнă. Асăннă чаçăн боецĕсем, икĕ кун хушши çапăçса, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 2.250 çынна пĕтернĕ, 39 пулемет, 6 миномет, 9 оруди, 240 винтовка, 80 лаша тытса илнĕ.

Ĕнерхи çапăçусенчен пĕринче уйрăмах лейтенант Рубцов юлташ хăйне палăртнă. Вăл хăйĕн боецĕсемпе пĕрле тăшманăн 5 огневой точкине çĕмĕрнĕ. Тăшманăн атакăласа пыракан ушкăнĕсене 100 метр çывăха ярса, пирĕн боецсем вĕсене хирĕç вăйлăн пеме пуçланă. Çакăнта атака тăвакан тăшманăн войскисенчен 500 салтака пĕтерсе тăкнă.

Совет Союзĕн Геройĕ Зиновьев юлташ ертсе пыракан Н-ски часть çапăçури Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пынă ăмăртăвăн итогĕсене пăхса тухнă. Итогсем тăрăх, февраль уйăхĕнчи 20 кун хушшинче çак чаçăн боецĕсем нимĕçсен 3.220 салтакĕпе офицерне пĕтернĕ, 150 ытла автомашина, 130 таран оруди, 8 танк, 80 мотоцикл тытса илнĕ. Çапăçусенче мала тухнă красноармеецсенчен 100 çынна ытла команда ĕçĕнчи пысăкрах вырăнсене куçарнă. Çак кунсенче боецсем патне Башкири ĕçсыннисен делегацийĕ çитнĕ. Ку делегаци хăйне пĕрле боецсемпе командирсем тата политработниксем валли 18 вагон тĕрлĕрен парне тата Башкири ĕçсыннийĕсенчен çырусем нумай илсе пынă.

З. ЛИПАВСКИЙ.

Отечественнăй вăрçăн паллă геройĕ

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, мартăн 1-мĕш. (ТАСС). Старши лейтенант С. Харитонов нимĕçрен те хăрамасн хăюллă разведчик, унăн паллă ĕçĕсене хăйсем патĕнче çеç мар, ытти чаçсенче те нумайăшĕ тивĕçлипе пĕлсе тăраççĕ. Харитонов юлташ пĕрре кăна мар тăшман тылне пăла кĕрсе кайса тарăн рейдсем тунă, тăшман войскисем епле вырнаçса тăни çинчен хаклă сведенисем пĕлнĕ, «чĕлхесем» илсе тухнă, нимĕçсен коммуникацийĕпе çыхăну линийĕсене аркатнă, вĕсене хăйсен укрепленийĕсенчен çапа-çапа кăларнă.

Çак кунсенче çеç-ха Харитонов юлташа пĕр пысăк задани панă. Ку задани тăрăх, унăн йĕлтĕрлĕ автоматчиксен отрячĕпе пĕрле фронт урлă каçмалла пулнă, противник тылне инçете кĕрсе кайса тăшманăн вăйĕсем ăçта тата мĕнле тăнисене пĕлмелле пулнă.

Çак задание Харитонов пĕтĕмпех тата срокра туса çитернĕ. Тăшман оборонин линийĕ урлă каçса, Харитонов юлташ хăй отрячĕпе пĕрле нимĕçсен тылне 50 километра яхăн шала кĕрсе кайнă. Хăйсен çулĕ çинче нимĕçсенне 19 çыхăну линине касса татнă. Нимĕçсен тылне шалалла кĕнĕ чух пĕр тĕлте Харитонов отрячĕ противникăн 10 разведчикне хирĕç пулнă. Кĕске вăхăт хушши, анчах та хаяррăн çапăçса, фашистсен разведчикĕсене пурне те пĕтерсе тăкнă.

Каялла тăвăрăннă чух Харитонов нимĕçсен боеприпассем турттарса пыракан обозĕпе тĕл пулнă. Автоматран тĕл пенипе Харитонов обозпа пыракан нимĕçсене тата вĕсен лашисене йăлтах пĕтернĕ. Çакăн хыççăн нимĕçсем Харитонова хăйне те часах курса хыçран хăвалама пуçланă. Харитонов хăйĕн юлташĕпе, Мягковпа пĕрле, апат çиме тухнă нимĕçсен блиндажне кĕрсе пытаннă. Апат çинĕ хыççăн блиндажа таврăнакан нимĕç салтакĕсем пурте Харитоновăн тĕл лекекен вĕри пулĕсене «тутанса пăхнĕ». Перкелешнĕ сасса илтсе ытти блиндажсенчен те нимĕçсем чупса тухнă. Вĕсем, тапипа хӳтĕлентсе, Харитоновпа Мягков йышăннă блиндажа атакăлама тытăннă, ăна йĕри-тавра хупăрласа илнĕ. Маттур разведчиксем нимĕçсене 10—15 метр çывăха янă та, вĕсене тытса илнĕ пулеметран пеме тытăннă. Блиндаж таврашне фашистсем виллисем нумай выртса юлнă. Нимĕçсем çавах та пирĕн маттур разведчиксене тытса илес ĕмĕте пăрахман. Юлашкинчен вĕсем блиндаж çине гранатăсем ывăтма пуçланă. Анчах та Харитоновпа Мягков вĕсене çĕре ӳкечченех ярса тытса каялла, нимĕçсен ушкăнĕ çинелле вăркăнтарнă. Çак вăхăтра, нимĕçсем нимĕн тума та аптăраса тăнă самантпа усă курса, Харитоновпа Мягков блиндажран тухса тарнă.

Çав каçхинех Харитоновпа Мягков хăйсен чаçне чиперех çитсе, командование противник çинчен сведенисем панă.

Старши лейтенант Харитонов юлташ—Донбасра шахтер пулнă. Нимĕç оккупанчĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче вăл 11 хутчен суранланнă. Сурансенчен сывалса тухсанах вăл нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешме татах фронта пынă. **В. МАЛЫШЕВ.**

Тăшмана хĕссе пыратпăр

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, мартăн 2-мĕш. (ТАСС). Пирĕн боецсем тăшман хирĕç тăнине вăйлăрах та вăйлăрах сирсе пыраççĕ.

Пирĕн боецсемпе командирсем, çĕнтерӳллĕ вăйлă наступлени хăвачĕпе хавхаланса, паттăррăн çапăçаççĕ, хăюлăхпа геройлăх кăтартаççĕ.

Пĕр ялшăн калама çук вăйлă çапăçу пуçланса кайрĕ. Н-ски подразделенин боецĕсемпе командирĕсем, автоматчиксемпе артиллери пулăшса пынипе, тăшмана систермесĕр ял патне шуса пычĕç те тăшман территорийĕ çине тăвăл пек ыткăнса кĕрсе кайрĕç. Тытăçура фашистсем 50 çынна ытла çухатрĕç, пирĕннисем 2 пулемет, 4 автомат, нумай винтовкăсем, çар пурлăхĕсем чылай тытса илчĕç.

Юлашки çапăçусенче уйрăмах пулеметчик-комсомолецсем— Рудневпа Филиппов юлташсем маттур çапăçрĕç. Вĕсенчен кашниех 30-шар ытла фашиста вĕлернĕ. Пулеметчик Горев 55 нимĕçе вĕлернĕ. Уткин лейтенант расчечĕ фашистсене 100 çынна ытла, старши лейтенант Парастовăн батарейи 150 çынна ытла пĕтерсе тăкнă.

Тăван çĕршыва ирĕке кăларас пархатарлă та паллă ĕмĕтпе хавхаланса, совет боецĕсем, тăшман хирĕç тăнине сирсе пăрахса, унăн çыннисемпе техникине пĕтерсе тăкса, тăшмана пĕр чарăнмасăр хĕваланăç еннелле хĕссе пыраççĕ.

И. ГРИБОВ.

ÇУРÇĔРТИ ДЕЙСТВУЮЩИ ФЛОТ. **Укерчĕк çинче:** летчик-истребитель, лейтенант-орденоносец З. А. Сорокин юлташ. Вăл сывлăшри çапăçусенче противникăнне 5 самолет персе антарнă. Пĕр çапăçура вăл фашистсен самолетне таранпа çĕмĕрнĕ, вара хăйĕн те шăвса ларнă кӳлĕ çине анса лармалла пулнă. Çакăнта вăл парашютпа сиксе аннă икĕ нимĕç летчикне хирĕç çапăçнă. Тытăçса çапăçнă чухне вăл фашистсене иккĕшне те вĕлернĕ. Хăюллă та паттăр летчик темиçе талăкран хăйĕн чаçне таврăннă.

Е. ХАЛДЕЙ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Хĕвеланăç фрончĕ). **Укерчĕк çинче:** Хирти Н-ски аэродромра самолет çине нимĕç салтакĕсем тăракан вырăнсене пăрахмалли листовкăсем тиеççĕ.

Л. ВЕЛИКЖАНИН фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Германи çарĕнче дисциплина чакса пырать

КАРЕЛИ ФРОНЧĔ, мартăн 1-мĕш. (ТАСС). Тыткăна илнĕ нимĕç салтакĕсем çапла каласа кăтартаççĕ: Германи çарĕн вăй-хăвачĕпе шухăш-кăмăлĕ чаксах пырать, салтаксем офицерсене ӳсăнах пăхăнман тĕслĕхсем темĕн чухлех пулкалаççĕ.

141-мĕш горно-егерски полкри 2-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ старши ефрейтор Томас Шацер çапла каласа парать:

«Пирĕн салтаксем ывăнса çитрĕç. Вĕçĕ-хĕррисĕр пыракан çапăçусем вĕсене йăлăхтарса çитерчĕç. Малалла лайăх пуласси нимĕн те курăнмасть. Салтаксем ӳсăнрах та ӳсăнрах вăрçа хирĕçле юрăсем юрлама тытăнчĕç, офицерсем вĕсене чарма хăяймаççĕ те ĕнтĕ. Дисциплина пирĕн полкра пачах арканса кайнă. Эпĕ салтаксем офицерсем хушшинче тума кирлĕшменни çинчен темиçе вунă тĕслĕх те кăтартса пама пултаратăп. Кунта пĕр тĕслĕх кăна кăтартса парам, ăна эпĕ хам куçпа курнă. 7-мĕш ротăри ефрейтор Штабера разведкăна кайма приказ панăччĕ. Ку приказа хирĕçлесе вăл çĕвар туллин ятлаçса илчĕ те сывăрма кайрĕ. Приказа пурнăçлама килĕшменнишĕн Штабера персе пăрахрĕç»

6-мĕш горно-егерски полк çумĕнче шутланса тăнă разведчиксен подразделенийĕнче пулнă, халĕ тыткăна лекнĕ ефрейтор Отто Чернецкий çапла каласа кăтартать:

«Пирĕн çарта салтаксен апат-çимĕçĕ кунсерен начарланса пырать. Пирĕн нумайĕшĕн, эпир çурçĕрте вăрçатпăр пулсан та, ку таранччен те ăшă тумтир çук. Паллах ĕнтĕ, тăм илсе шăнса пăсăлнисем пирĕн темĕн чухлех. Рудольф Чалковичăн нумаях пулмасть шăнса пăсăлнă урине татрĕç. Пирĕнтен нумайĕшĕ ЦЫНГА чирĕпе чирлеççĕ. Манăн хамăн та икĕ шăл тухса ӳкрĕ. Салтаксем офицерсене кураймаççĕ. Пуринчен ытла Шернер генерала кураймаççĕ, мĕншĕн тесен вăл салтаксенчен питех те мăшкăллать тата ытла та хытă асаплантарать».

П. БАРАННИКОВ.

Танкистсем çапăçура

КАЛИНИНСКИ ФРОНТ, мартăн 2-мĕш. (ТАСС). Лисовец комсомолец танкĕн экипажĕ боевой задани илнĕ. Ку задани тăрăх, экипажăн противник вăйлăн çирĕплетнĕ Н. яле кĕрсе каймалла, унта тăшман войскисен гарнизонне пĕтерсе яла йышăнса илмелле пулнă.

Çапăçусенче пĕр-пĕринпе çирĕппĕн тусланса çитнĕ танк экипажĕ хăйне панă задание хавасланса йышăннă. Шăпах кăтартса панă вăхăтра танк яла çĕмĕрсе кĕнĕ. Чарăнмасăр хыттăн пынă майĕпе вăл фашистсене гусеницăсемпе тапта-тапта лапчăтнă, вĕсен орудийĕсемпе пулемечĕсене хăйĕн вучĕпе пĕтерсе тăкнă.

Çапăçу хыççăн ял хушшинче нимĕç салтакĕсемпе офицерсен 210 вилли, танксене хирĕç пемелли 2 оруди, çĕмĕрнĕ 4 миномет, 4 пулемет, танксене хирĕç пемелли 3 пăшал сапаланса выртса юлнă. Кусемсĕр пуçне маттур танкистсем противникăн 80 лавлă обозне сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне тытса илнĕ.

Кĕтмен çĕртен пырса çапнипе сехĕрленсе ӳкнĕ фашистсем тăна кĕрсе çитсен, гарнизонăн юлашкине пирĕн танка хирĕç кĕрешме тăратнă. Танк çине танксене хирĕç пемелли орудисенчен вăйлăн пеме пуçланă. Танк çĕмĕрĕлнĕ, çунма тытăннă. Унăн командирĕ Лисовец хăй те аманнă. Çавах та вăл пĕтĕм вăйне хурса, тăшман тăвăллăн персе тăнă хушăрах, танкри пушара сӳнтернĕ те ăна çапăçу вучĕ ăшĕнчен аяккалла илсе тухнă. Противник гарнизонĕн юлашкийĕ танк экипажĕпе çапăçса чылаях хавшаса çитнĕ пулнă тата вăл хăйĕн лайăх позицине те çухатнă ĕнтĕ. Çавăнпа та пирĕн пехота атака пуçласа ярсан, тăшман текех хаяррăн хирĕç тăма пултарайман. Пирĕн пехота, противника çăмăллăнах çĕнтерсе, яла йышăнса илнĕ. Лисовец комсомолец танкĕн экипажĕ хăйне панă боевой задание чыслăн пурнăçланă.

Лисовец юлташ тăракан подразделенирех тепĕр танк экипажĕ, лейтенант Коваленко ертсе пынипе, паллă çĕнтерӳ тунă. Ку экипаж пĕр ялшăн пынă çапăçура тупăсемпе пулеметсенчен персе нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 110 çынна пĕтерсе тăкнă, противникăн пулеметне, миномене тата вăрçă хатĕрĕсем тиенĕ 12 лавне таптатса çĕмĕрнĕ.

Совет воинĕсен, малалла çĕнтерсе пырас хавхаланăвĕ кунран кунах ӳссе, вăйланса пырать, вĕсем тăшмана вирлĕрен вирлĕ пыра-пыра çапаççĕ, унăн техникине тата чĕрĕ вăйне пĕтереççĕ. Пĕр Н-ски часть кăна пилĕк кун хушшинчи çапăçусенче 1.426 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, вĕсен 94 ДЗОТне аркатнă, нимĕçсенне 124 автомашина, 21 велосипед, 15 миномет, 24 автомат, 4 оруди, 27 пулемет, 330 винтовка, минăсемпе тултарнă 181 ещĕк, 3.500 граната, 300 мăшăр йĕлтĕр тата ытти çар хатĕрĕсем тытса илнĕ, çак çар хатĕрĕсемпе продовольстви 4 складне тата боеприпассен 2 складне пĕтерсе тăкнă.

Е. КОРЯВИЧЕВ.

Снайпер Карпин

Снайпер К. Сатаев паттăрлăхне пĕтĕм часть пĕлсе тăнă. Вăл тăшмана хирĕç хăюллăн çапăçнă. Агитаторсем ытти боецсене унран пример илме чĕннĕ.

Вăл сарлака кăкăрлă патмар çын. Темĕнле йывăр вăхăтсенче те Сатаев нихăçан та салхуламан.

— Командир приказне пурнăçланă чухне Хĕрлĕ Çар воинĕшĕн нимĕнле чару та пулмалла мар,—тенĕ вăл яланах.

Пур ĕçе те Сатаев пĕтĕм кăмăлтан туса пынă. Анчах та пĕр çапăçура тăшман пульли Сатаев снайперăн паттăр пурнăçне ĕмĕрлĕхех татрĕ.

Хаклă боецăн вилĕмĕ çине ответлесе, красноармеец Карпин çапла каларĕ:

— Эпир унпа Чăваш республикинчен. Вăл белофиннсене нумай пĕтерчĕ. Унăн вилĕмĕшĕн эпĕ тăшмана тавăрăп. Снайпер пулма тата тăшмана мĕн вăй çитнĕ таран пĕтерме сăмах паратăп.

... Хĕрӳллĕ çапăçу хыççăн боецсем канма вырнаçнă. Вăхăтлăха, отделени командирĕ аманнă пирки, отделени командирне Карпина лартнă.

Вĕсем патне командный пунктран Марьин лейтенант пынă. Çав самантрах Карпин тункката хыçĕнче выртакан белофинна асăрханă. Тăшман лейтенант çине пеме хатĕрленнĕ пулнă. Унччен те пулман, пăшал сасси янăраса кайнă.

Çапла Карпин лейтенанта çăлнă. Тункката патĕнче аллисене сарса пăрахнă финн офицерĕн вилли выртнă. Ухтарнă хыççăн офицер çумĕнче пăшал, документсемпе картта тупнă.

Çакăнтан пуçланнă Карпинăн снайперла ĕçĕ, вăл ăна вĕренессишĕн пĕтĕм вăйне хунă.

Кашни çапăçу хыççăнах командирăн тетрадĕнче Карпин вĕлернĕ белофиннсен шучĕ ӳсех пынă. Снайпер пулнăранпа Карпин 39 белофинн салтакне пĕтернĕ.

М. Р.

Действующи арми.

Пуçарулăх

...Взвод тăшманăн оборона линине татма приказ илнĕ. Тăшман чылай вăйлăрах пулнă.

Пуçланнă çапăçура взвод командирне аманнă.

— Итлĕр ман командăна!—илтĕнсе кайнă Мамыкинăн çирĕп сасси.—Пĕтерер бандитсене! Ман хыççăн!

Взвод атакăна ыткăннă. Çывăхрах тăшманăн пулемечĕ ĕçлеме пуçланă. Боецсем вăхăтлăха лăпланса выртнă.

Мамыкин гранатăна хатĕрленĕ те юлташĕсенчен уйăрăлса пулеметчиксем патне шуса пынă. Пеме çаплах чарăнман. Мамыкин ывăтнă граната çурăлса кайнă. Тăшманăн пулемечĕ прислуги мĕнĕпех сывлăшпа сирпĕнсе хăпарнă. Взвод малалла ыткăнса белофиннсен группине пĕтерсе тăкнă.

Хĕрлĕ Çара Чăваш республикинчен килнĕ Мамыкин боец çапăçу пĕтиччен взвода тĕплĕн ертсе пынă.

Красноармеец М. РЫБАКОВ.

Действующи арми.

Ирĕке кăларнă вырăнсенче

ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ. Паян эпир нимĕçсен халĕ аркатса тăкнă 290-мĕш пехотнăй дивизийĕ нумаях пулмасть кăна пире хирĕç тăнă вырăнта пултăмăр. Çур çула яхăн çак вырăнта фашистсем хуçаланса пурăннă. Çав вăхăтра вĕсем халăх пурăнакан пунктсенчен кашнинченех хирĕç тăмалли вырăнсем тума ĕлкĕрнĕ. Ялсене кăмелли вырăнта укрепленисем туса пĕтернĕ, укрепленисене пралук картасемпе çавăрса тухнă. Тĕпсакайсемпе подвалсенче нимĕçсем нумай амбразуăллă ДЗОТ-сем тунă. Ялсем йĕри-тавра минăсем хурса тухнă. Пирĕн боецсемпе командирсем, нимĕçсен оборона позицийĕсене татса, вĕсем вăйлăн хирĕç тăнине сирсе пăрахса, тăшмана пуçĕпех пĕтерсе тăкма пултарнă.

Хамăрăн малта пыракан чаçсене хăваласа çитес тесе, эпир темиçе вуншар километр вырăс çĕрĕпе, нимĕç оккупанчĕсенчен хăтарнă çĕрпе, пытăмăр. Тăшманăн арканнă блиндажĕсем. Фашистсем пăрахса хăварнă тупăсем. Нимĕç автомобилĕсем. Лавсем. Пулеметсем. Минометсем. Снарядсемпе патронсем тултарнă ещĕксем. Вăрман пек хĕрес лартса тухнă масарсем. Шучĕ те çук фашист виллисем. Пĕр ялта вĕсем вахалтарах, тепĕр ялта нумайрах—пĕтĕмĕшпе илсе пăхсан, калама та çук нумай вара вĕсем, вырăс хĕçпăшалĕнчен вилĕм тупнисем.

Халăх хăйне хăтаракансене савăнăçлăн кĕтсе илет. Стариксем, хĕрарăмсем, пĕчĕк ачасем, сивве пăхмасăр, сехечĕсехечĕпе урамра тăраççĕ, красноармеецсене курсанах хавассăн саламласа ырă сунаççĕ. Красноармеецсем вăтанаççĕ, вĕсене темĕнле аван мар пек туйăнать. Вăл акă мĕнрен килет: оккупантсенчен хăтарнă халăх пурăнакан пунктсенчи гарнизонсенче ĕнтĕ çапăçу участникĕсем çук. Строевой подразделенисем тахçанах ĕнтĕ малалла кайнă; вĕсем вырăнне халĕ иккĕмĕш эшелонри подразделенисем килеççĕ. Вĕсен шутĕнчех çыхăнăва йĕркелекен связистсем, çулйĕрсене юсакан, транспорт хуçалăхне йĕркелекен инженерлăй войскăсем, поварсем, хăйсен базине действующи чаçсем çывăхнелле илсе пыракан госпиталь персоналĕ.

Пĕр ялта эпир акă мĕнле сцена куртăмăр: пĕр лутрарах кăна красноармеец шур сухаллă колхозник умĕнче тăрать.—Мĕншĕн-ха пире çапла тав тăватăн, асатте, мĕншĕн?—тет вăл ăна.—Эпир çав çапăçусенче пулман вĕт-ха,—тет.

Анчах старик ăна итлесшĕн те мар: сăхсăхса илсе вăл пĕр вĕçĕмрен: «Тавтапуç тăвансем, килнĕшĕн, тавтапуç хăтарнăшăн»,—тет.

Нимĕçсен 290-мĕш дивизийĕ тăнă çав 6 уйăх хушшинче мĕн-мĕн кăна курман-ши вырăнти халăх. 6 уйăхĕ те пĕр тăтăш сĕм-хура каç пек тăсăлнă. Пĕр совхозра нимĕçсем инвалидсен çуртне вут тĕртсе çунтарса янă. Унта чĕрĕллех стариксемпе карчăксем 20 çын çунса кайнă.

Тепĕр ялта нимĕçсем арçынсемпе çамрăк ачасене пере-пере пăрахнă. Н. ялĕнче çавсемех тыткăна лекнĕ 7 красноармееца асаплантарса вĕлернĕ. Чылай ялсенче нимĕçсем çуртсене çунтара-çунтара янă. Хăшпĕр ялсенчен кĕл çеç тăрса юлнă. Район центрĕнче варварсем амбулатори вырăнаçнă çурт çине орудисемпе минометсенчен пенĕ, çав çуртра 100 çынна яхăн пулнă. Çурт ишĕлчĕкĕсем айне пулса 7 çемье вилнĕ. Хаçат валли çырнă кĕске заметкăра фашистсен ирсĕр ĕçĕсене шутласа та тухас çук.

Н-ски районра халĕ çĕнĕрен совет пурнăçĕ йĕркеленет. Нимĕçсем тунă суранран юн юхасса юхать те,—çитĕ-ха вăхăт, ӳт илĕ сурана. Парти райкомĕнче, ĕçсынни депутачĕсен районри совечĕнче ĕçлекен çынсен халĕ чи хĕрӳ вăхăт. Райкомпа райсовет халлĕхе иккĕшĕ те пĕр пĕчĕк çурта вырнаçнă. Унта хальхи вăхăтра кунĕн-çĕрĕн çын татăлмасть. Райком секретарĕсем—Ивановпа Петров юлташсем, райсовет председателĕ Алексеев юлташ нумаях пулмасть кăна партизанра çӳренĕ. Партизансен кунти отрячĕ (ăна Петров юлташ ертсе пынă) нимĕçсемпĕн аçа та çиçĕм пулнă. Вăл 300 фашиста яхăн пĕтернĕ. Халĕ партипе совет организацийĕсем район территорийĕнче пурĕ миçе çын юлнине шутлаççĕ, суртйĕрсĕр юлнă çынсене вырнаçтарас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ, ялхуçалăх инвентарĕсемпе вăрлăх мĕн чухлине палăртаççĕ. Нумаях пулмасть кăна орудисем кĕрлесе тăнă вырăнта халĕ пурнăçра кирлĕ кулленхи-кунхи ĕçсене туса пыраççĕ.

Анчах та фронт инçетре мар, районра пурăнакан çынсем çавăнпа та мĕн вăй çитнĕ таран Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ. Çар чаçĕсем çӳрекен çулсене тасатаççĕ, татăлнă çыхăнусене связистбоецсемпе пĕрле çĕнĕрен сыпаççĕ. Вырăнти халăхсем Хĕрлĕ Çар ретне илме ыйтаççĕ. Çавăн пек Хĕрлĕ Çара илме ыйтса çырнă хутсене районри çар комиссарĕ капитан Волков пире вуншарăн кăтартрĕ.

Фашизмăн тискер пусмăрне тӳссе курнă çынсем нимĕç оккупанчĕсене пĕтĕм чунтан кураймаççĕ. Тăшмана кураймании фашистсен урнă кĕтӳне аркатса тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшать, мирлĕ çынсене ĕçре чаплăрах та чаплăрах çитĕнӳсем тума хавхалантарать.

И. ПАВЛОВСКИЙ.

(«Правда», мартăн 3-мĕш).



ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Хĕвеланăç фрончĕ). **Укерчĕк çинче:** радист, 2-мĕш рангри воентехник В. С. Золотцев юлташ малти линире репродуктор лартать, малти линири нимĕç салтакĕсем валли станцирен çав репродукторпа калаçусем параççĕ.

Л. ВЕЛИКЖАНИН фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Учителĕн пур енĕпе те примерлă çын пулмалла

Пирĕн учительсем хушшинче халĕ-хĕн «кам малалла каймасть — çав каялла чакать» тенĕ сăмахне çителĕклĕ виçсе пăхман çынсем те час-часах тĕл пулаççĕ. Çавăн пек çынсем хăйсен пĕлÿлĕхĕпе мăнкăмăлланса, пурнăçра часах кая тăрса юлаççĕ.

Ĕçе пултаракан авторитетлă учитель ятне илесси çăмăл ĕç мар. Учитель яланах массăран малта пымалла, унăн пĕлĕвĕ анлă пулмалла, политика енĕпе вăл—çирĕп, шанчăклă пулмалла. Унăн ачасене анчах мар, çитĕннисене те вĕрентмелле. Ахальтен мар В. И. Ленин учителе—«халăх учителĕ» тесе чĕннĕ, хакланă ăна.

Учитель хăйĕн пĕлĕвне вĕçĕ-хĕррисĕр ÿстерсе, çĕнетсе пымалла. Çавăн пек учитель анчах уроксене туллин, пахалăхлă ирттерме, ачасене пысăк пĕлÿ пама, халăх хушшинче авторитетлă пулма, чаплă агитаторсен ретĕнче тăма пултарать.

Отечественнăй вăрçă пынă вăхăтра учителĕн пушшех те вăйлă ĕçлемелле. Унăн ачасене те, çитĕннисене те вăрçă вăхăтĕнче кирлĕ пек хавхаланса, ăмăртса, тăван çĕршыва чĕререн парăнса, ăна юратса ĕçлеме вĕрентмелле.

Куллен кун хаçат-журнал вулакан, яланах радиопа усă куракан, хальхи событисене тĕплĕн виçсе пăхса йышăнакан учитель кăна тĕрлĕ суя хыпарсене сирсе ярса, массăна, ачасене йăнăш çулпа каясран сыхлама пултарать. Хаçатсене пĕр номер сиктермесĕр вулакан, радио тăрăх пĕр передачăна та сиктермесĕр итлекен учитель анчах хăй вырăнĕнче çирĕп пулма пултарать.

Ĕлĕкхи ĕмĕрсенче «ытлашши» пĕлни тепĕр чухне пĕлекен çыншăн «сиенлĕ» те пулнă. «Нумай пĕлекен» çынсене тирани влаçĕ курайман, вĕсене тăшман вырăнне хунă. Çавăнпа та ун пек вăхăтсенче «каланă сăмах — кĕмĕл, каламанни—ылттăн» тенĕ сăмахсем ирĕксĕрех халăх хушшинче хисеплĕн шутланнă. Ун пек самантсенче «пĕлĕт çинче турă, çĕр çинче патша» тенине иккĕленмесĕр ĕненекен, пупсен аллисене чуптăвакан мĕскĕн учительсем çеç «хисеплĕ» пулнă.

Халĕ пурнăç пысăк утăмсемпе малалла пыракан çĕршывра, уйрăмăнах отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче, пире нумай вĕреннĕ çынсем кирлĕ. Учителе илсен, вăл пур енĕпе те культурăллă, примерлă, сисĕмлĕ çын, çĕнĕ пурнăçшăн юрăхлă кадрсем хатĕрлекен çын пулмалла. Çапла пулас тесен, унăн педагогика училищи панă пĕлĕвне татти-сыпписĕр ÿстерсе, çĕнетсе пымалла. Учителĕн большевизм вĕрентĕвĕпе çирĕппĕн хĕçпăшалланмалла.

Анчах та учительсен ретĕнче час-часах сÿрĕккĕн ĕçлекен çынсем те пулаççĕ. Тĕслĕхе Изамбаево ялĕнчи учительница пулнă Савельевăна илер. Çак учительница большевизмпа хĕçпăшалланас, халăха тĕнчери лару-тăру çинчен ăнлантарса парас, ачасене коммунистла воспитани парас вырăнне пĕтĕмĕшпех урăхла, тÿнтерле ĕçлесе пынă. Вăл ку таранччен халăх хушшинчи тĕшмĕшле йăласене, сиенлĕ хăнăхусене тытса пынă. Картпа юмăç пăхма юратнă. Вăл учитель ĕçĕсене юратман, уроксене иррăн, тĕплĕн хатĕрленмен. Хăйĕн пĕлĕвне ÿстересси çинчен шухăшламан та. Киревсĕр ĕçĕсемпе Савельева çамрăксене те, ваттисене те, хĕрарăмсене те хăйĕнчен сивĕнтернĕ. Çакăн пек çынсем чĕререн ĕçлекен учительсен ятне çĕртеççĕ, лайăх учительсене вăтантараççĕ.

Илнĕ пĕлÿсене çĕнетсех пымалла. Ĕçре пулман пуртă тутăхса хăйне хăй мăкалнă пек, илнĕ пĕлÿлĕх те, текех çĕнетсе пымасан, çĕнĕ «çĕпре» ямасан —тутăхать, пăнтăхать.

«Эпĕ вунă çул вĕреннĕ, хам ĕмĕре çителĕклĕ ăс пухнă»—тесе шухăшлакан учитель пысăк йăнăш тăвать, хăйне хăй сиен кÿрет.

«Ĕмĕр пурăн—ĕмĕр вĕрен» тенĕ халăх сăмахне нихăçан та манма юрамасть. Илнĕ пĕлĕве яланах çĕнетсе, ÿстерсе, сарса пымалла.

ИПАТИЙ МАРКОВ.

РСФСР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учителĕ.

ВĂРМАН ХАТĔРЛЕВĔ

Плана срокчен тултарассишĕн

ÇЕМĔРЛЕ. (**Чăваш Коммуни» корр.**). Районри малта пыракан колхозсем вăрман хатĕрлевĕнче те тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем вăрмана çителĕклĕ таран ĕç вăйĕ парса тăрса, хăйсене панă заданисене срокчен тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Кабаново участокĕнче уйрăмăнах юлашки вăхăтра Улхаш ялсоветĕнчи «Лесной огонек», «Искра», «Подборное» тата «Красноармеец» колхозсем лайăх результатсем кăтартаççĕ. Вĕсем вăрмана ĕç вăйĕ парса тăрас тĕлĕшпе графика йĕркеллĕн пурнăçласа пыраççĕ. Çавна май вĕсем плана та ытлашшипех тултарса ĕçлеççĕ. «Искра» колхоз вăрман хатĕрлев планне февралĕн 25-мĕшне 70 процент ытла тултарнă. Колхоз членĕсем халь ăмăртăва анлăн сарса пырса, плана мартăн 10-мĕш тĕлне ытлашшипех тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Юлашки вăхăтра Молгачкино ялсоветĕнчи «Молодая сила» колхоз та вăрмана çителĕклĕ таран ĕç вăйĕ парса тăрать. План тăрăх ку колхозран çуран 5 çын, лашапа 10 çын ĕçлемелле, халĕ çуран 8 çын, лашапа 10 çын ĕçлеççĕ. Колхоз вăрманта ĕçлеме ятарласах бригада организациленĕ, ăна звеносене пайланă. Кашни звенон кирлĕ чухлĕ инструментсем пур. Колхозниксем ир пуçласа каçченех вăрманта ĕçлеççĕ, хăйсен ĕç нормисене иртерсе тултараççĕ. В. Отнюков, В. Алюков тата Сидоров юлташсем кулленхи нормăна 150 процент тултараççĕ. Спиридонова юлташ звенинчи М. Козловăпа И. Удиванова юлташсем те нормăна ирттерсе тултараççĕ.

«Молодая сила» колхоз членĕсем ăмăртăва хутшăнса хăйсем çине квартал планне: касса хатĕрлес енĕпе 10 кун, турттарас енĕпе 5 кун малтан тултарма обязательство илчĕç. Халĕ вĕсем ăна ăнăçлăн пурнăçласа пыни курăнать.

Бригадăсем, звеносем туса ĕçлени тухăçлăн ĕçлеме пулăшать. Çакна ытти колхозсен примерĕнчен те курма пулать. Анчах каламалла, уйрăм колхозсен руководителĕсем ăна ку таранччен те ăнланса илеймен-ха. Вĕсем вăрманта ĕçлеме çынсене организованно ямаççĕ, бригадăсем организацилемеççĕ. Хăшпĕрисем тата ĕç инструменчĕсемсĕр ĕçлеме пыраççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозран юлашки вăхăтра вăрманта 15—20 çын ĕçлет, анчах колхоз плана тултарассипе юлса пырать. Мĕншĕн тесен колхоз вăрманта ĕçлекенсене кирлĕ условисем туса паман, звеносем те организацилемен, кунта ĕçлекенсенчен нихăшĕ те ĕç нормисене тултарса пымасть.

Çакăн пек картинăна «Труд» колхозра та курма пулать. Ĕç вăйне тĕрĕс организацилеменнине пула ку колхоз членĕсенчен те чылайĕшĕсем нормăна тултараймаççĕ, колхоз вăрман хатĕрлев планне пĕтĕмпе те 8,5 процент çеç тултарнă.

Х. ЛИСИН.

Туляреми чирĕ

Туляреми—еректен чир, вăхăчĕпе вăл вăйлăн сарăлма пултарать. Вăл чир çынсем хушшине шăшисенчен, йĕкехÿресенчен тата çĕрмулкачĕсенчен ерсе сарăлать. Çак асăннă чĕрчунсем туляремипе нумай чирлеççĕ тата чирленисем пурте вилеççĕ.

Туляреми чирне сараракан уйрăм микробсем пур. Çав микробсем çынна çакăн пек лекеççĕ. Туляремипе чирленĕ шăшисемпе йĕкехÿресем час-часах утă-улăм хушшинче е ытти апат-çимĕç продукчĕсем çывăхĕнче те вилсе выртаççĕ. Ун пек чухне вĕсене чирлеттерсе вĕлернĕ туляреми микробĕсем çав утă-улăм çине, çавăн пекех тата çывăхри апат-çимĕç продукчĕсем çине те сарăлма пултараççĕ. Вара, паллах, çиекен апат-çимĕçпе пĕрле туляреми микробĕсем этем ăшне те кĕрсе каяççĕ. Утă-улăм çинчи, çавăн пекех тата тырă хывăх çинчи микробсем этем ăшне çав япаласене хускатнă чух вĕçекен тусанпа пĕрле лекме пултараççĕ. Ăша кĕнĕ микробсем вара çынна та туляремипе чирлеттереççĕ. Пĕр чирленĕ çынран ку чир часах ытти сывă çынсем хушшине те сарăлать.

Туляреми микробне ертнĕ çын чирлесе ÿкиччен пĕр талăкран пуçласа тăхăр талăкчен пурăнма пултарать. Чир çакăн пек паллăсемпе пуçланса каять: пуç ыттăн ыратать, шăмшак çĕмĕрет, йывăрлантарать, хăш чухне йĕклентерет, хăстарать, малалла ÿт тир вĕриленет, вăхăчĕпе шăнтать, вăхăчĕпе вĕриленсе тар юхать. Кун пек тапхăр иккĕ талăка пырать. Иккĕ талăкран чир пушшех йывăрланать: температура вĕриленсе 38—40 градус таранах çитет, вăй пĕтет. Вĕриленнĕ вăхăтсенче çын аташма та пултарать.

Туляреми чирĕн малтанхи паллисем грипп чирĕнни пекех пулса пыраççĕ. Çавăнпа та малтанхи кунсенче ăна грипран тата шатраллă тиф чирĕнчен уйăрма та çăмăл мар.

Чирленĕ хыççăн 3—4-мĕш талăкра çыннăн тирĕ ÿслĕк пуçланать, мăйпа хăлха таврашĕсем тата хул хушши айĕнчи лимфа железисем шыçăнса ыратма пуçлаççĕ.

Туляреми чирĕ пуриншĕн те пĕр пек паллăсемпе иртмест, вăл пилĕк-ултă тĕслĕ те пулма пултарать. Хăшĕсен чирĕ—железасен язвисемпе, хăшĕсен — железасен коньюнктивĕпе, хăшĕсен — бубонлă ангиноз формипе, хăшĕсен—лимфа железисен шыççипе тата теприсен—тифоидлă формăпа иртет. Чир 3—4 эрнене пыма пултарать.

Туляреми чирĕнчен çак майсемпе сыхланмалла. Шăши е йĕкехÿре вилли тупăннă çĕрти утă-улăма çара алăпа тытма юрамасть, алăсене сăран алса тăхăнмалла. Утă-улăма йăтнă чух, çав утă-улăм çÿппи е ун çинчи тусан тута-çăвара ан лектĕр тесе,—тутана тата сăмсана тутăрпа çыхса хÿтĕлемелле. Вилнĕ шăшисене, йĕкехÿресене, е вилнĕ шăшие çисе вилнĕ кушака çара алăпа тытма юрамасть.

Апат-çимĕçе (çăкăра, аш-какая, сĕт-çăва т. ыт. те) шăшисем çиесрен лайăх сыхласа усрамалла. Вĕсем патне шăши, йĕкехÿре пырса ан тĕкĕнтĕр.

Чĕрĕ шыв ĕçме юрамасть. Апат-çимĕç тытас умĕн алăсене яланах супăньпе çумалла.

Чирленĕ çынна сыввисенчен уйрăм выртармалла.

Кĕскенрех каласан, туляремипе кĕрешнĕ чух пуринчен ытла шăшисенчен, йĕкехÿресенчен хытă сыхланмалла; вĕсене килçуртра ĕрчеме памалла мар, апат-çимĕç тавраш тасалăхра тытса усрамалла. Çапла пурăнсан, туляреми чирĕ ерессинчен питех хăрамалли çук.

Врач И. СТОЛЯРОВ.

Пионер организацийĕсен ĕçĕсем

Районри чылай шкулсенче пионер организацийĕсем хăйсен ĕçĕсене вăрçă вăхăтне кирлĕ пек туса пыраççĕ. Кашни шкул ачи, кашни пионер хăй умне пур майсемпе те тăван Хĕрлĕ Çара, фронта куллен пулăшса пырас тĕллев лартнă. Отряд сборĕсенче хальхи вăхăтри тĕп ыйтусене сÿтсе-яваççĕ.

Акă, сăмахран, Тивĕшри вăтам шкулта 3-мĕш отрядра пионер-вожатăй пулса В. Прохорова комсомолка ĕçлет. Ку отрядра сборсем яланах йĕркеллĕ пулса иртеççĕ. Сборсенче Павлик Морозов пурнăçĕ-ĕçĕсемпе, Оборонăн Государственный Комитечĕн членĕсен, Совет Союзĕн маршалĕсен биографийĕсемпе, Хĕрлĕ Çарăн фронтри çăнтерÿсемпе паллаштарнă. Пионервожатăй тăрăшнипе пионерсем отечественнăй аслă вăрçăн участникĕпе тĕлпулу организациленĕ. Юлашки вăхăтсенче «На штурм», «Разведчики», «Кукушки» çар вăййисене туса иртернĕ. Кашни вăйăрах 80—90 шар вĕренекен хутшăннă. Çакăнпа пĕрлех 11 хутчен йĕлтĕрлĕ походсем, шашкăпа шахмăт турнирĕ туса ирттернĕ.

Ишек вăтам шкулĕнчи комсомолка Н. Данилова октябрятсемпе ĕçлессине лайăх йĕркеленĕ. Виççĕмĕш класра вĕренекенсене пурне те пекех пионера илнĕ. Халĕ унăн отрядĕнче иккĕ звено. Звеносем шкула сиктермесĕр çÿрес тата лайăх вĕренес тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе социализмлă ăмăртăва тухнă. Хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пионерсем çирĕппĕн пурнăçласа пыраççĕ. Отрядăн стена хаçачĕ вăхăтра тата пахасодержанилĕ тухса тăрать, вăл вĕренÿри çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме пулăшать.

Пионерсем хушшинчи ĕçе лайăх йĕркелес тесен, старши пионервожатăйсен отряд вожатăйĕсене кулленех пулăшса пымалла, семинарсем ирттермелле. Ярабайкассинчи туллимар вăтам шкулта çак ĕçе лайăх организациленĕ. Старши пионервожатăй Н. Тимакова юлташ отряд вожатăйĕсене пулăшас майпа звено тата отряд сборĕсене мĕнле ирттермелли çинчен, отрядпа звено вĕренÿ ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе мĕн тумалли çинчен, отрядра çар ĕçне йĕркелесси çинчен, тимĕр-тăмăр, эмел тума юрăхлă курăксем пухасси çинчен семинарсем туса ирттернĕ. Шкулта пионерсен дружинине организациленĕ. Отрядсенче тумалли ĕçсем çинчен дружина штабĕн начальникĕ кăтартусем парса тăрать. Дружина пуçарнипе Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли енчĕксем 200 ытла, «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума 354 тенкĕ укçа пуçтарнă. Нимĕç оккупанчĕсенчен тасатнă районсенчи шкул ачисем валли учебниксем, художествăллă произведенисем пухма тытăннă. Колхозсене çуракине хатĕрленме пулăшас майпа 10 лав кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 17 центнер кĕл пухнă, 72 центнер вăрлăх сортланă. 52 пионер йĕлтĕрçĕсен командинче тăрса 60 сехетлĕ программăна вĕренсе пĕтернĕ. Елчĕк вăтам шкулĕнчи пионерсемпе шкул ачисем чĕ ăзне отряд сборĕсенче сÿтсе-явнă хыççăн, пионерсем 40 чăх, 3 сурăх, 1 сысна, 2 кăвакал ÿстерсе пама пулнă.

Çавăн пекех Тăрăнти туллимар вăтам шкулта 81 чăх, 3 кролик, 3 сурăх, 3 сысна; Шетмĕпуç шкулĕнче 34 чăх, 13 автан, 7 хур, 2 кăвакал; Хыркасси шкулĕнче 147 чăх, 3 автан, 4 хур ÿстерсе пама йышăннă.

Анчах пур шкулсенче те пионерсен ĕçне кирлĕ вырăна лартман-ха. Васликассинчи пуçламĕш шкулти пионервожатăй П. Надеждина учительница пионерсен ĕçĕсене йĕркелемен, отрядра, стена хаçачĕсем кăларса тăрас, сборсем ирттерес тĕлĕшпе нимĕн те туман. Класра таса мар, пÿрт кăмакине эрешмен картисем карса илнĕ. Пионерсене тасалăха вĕрентсе пырасси çук. Пионерсем галстуксемпе çÿремеççĕ. Ачасем шкула сиктерсе çÿреççĕ, вĕренÿре кая юлса пыракансем те пур. Сĕньял Покровскри туллимар вăтам шкулти старши пионервожатăй А. Герасимова «манăн пионерсемпе ĕçлеме вăхăт çук» тесе ларать. Кăшавăш, Мăнал туллимар вăтам шкулĕсенче те пионерсем хушшинче ĕçлесси тивĕçлĕ вырăнта тăмасть. Ку шкулсенче Елчĕк вăтам шкулĕнчи пионерсемпе шкул ачисен ырă ĕçне сÿтсе-явса, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли кайăк-кĕшĕк ÿстерсе парас ĕçе халь те чăннипе тытăнман-ха.

Н. РУСАНОВ.

ВЛКСМ Ишлей райкомĕн секретарĕ.

Ирĕке кăларнă районсенчи халăх валли

ИШЛЕИ. Аслă Сталин ертсе пынипе пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар совет территорисене нимĕç оккупанчĕсенчен тасатса пырать, тăшмана каялла хăвалать.

Ирĕке кăларнă районсенче çĕнĕрен пурнăç пуçланать. «Сĕньял» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем нимĕç оккупанчĕсенчен тасатнă районсенчи ĕççыннисене пулăшас ĕçе пуçарчĕç.

Вĕсем нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă ĕççыннисем валли хуçалăхра кирлĕ япаласене пухма тытăнчĕç. Комсомолец А. Николаев 2 тарелка, 3 çĕçĕ, 5 вилка, 1 мăшăр носки, П. Семенов 2 çĕçĕ, 2 вилка, 5 кашăк, 1 стакан пама пулчĕç. Комсомолăн пуçламĕш организацин секретарĕ Т. Юдин 1 çĕлĕк, 2 тарелка, 2 çĕçĕ, 2 вилка, 10 кашăк пама пулчĕ. Нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă ĕççыннисем валли пĕтĕмпе 3 çĕлĕк, 15 тарелка, 29 çĕçĕ, 23 вилка, 29 кашăк, 12 стакан, 1 чейник, 2 чашăк, 3 мăшăр носки тата ытти кирлĕ япаласем пухăнаççĕ. Унсăр пуçне комсомолецсемпе çамрăксем 30 учебник, художествăллă кĕнекесем илсе пама йышăнчĕç.

А. МИХАЙЛОВ.

Вулав çурчĕн ĕçне чĕртмелле

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Ишлĕ-Шетмĕ ялĕнчи вулав çуртне (Пăлапуç-Нурăс ялсовечĕ) 2—3 уйăх ытла хутса ăшăтман ĕнтĕ. Вулав çурчĕн пуçлăхĕ пулнă Федорова юлташ хăйĕн ĕçне вăрçă тапхăрĕнче кирлĕ пек туса пыман. Вулав çуртĕнче библиотека пур, анчах та унта кĕнекесем йĕркесĕр сапаланса выртаççĕ, нумай кĕнеке çухалса пĕтнĕ.

Вулав çуртне пĕр экземпляр хаçат-журнал та килмест. Стена хаçачĕ те тухмасть. Иртнĕ çулта Ишлĕри вăтам шкул çумĕнчи драмкружок спектакльсем лартса парса вулав çуртне чылаях пулăшатчĕ. Кăçал, зала хутмасăр тăнă пирки, мĕнпурĕ те 2 спектакль çеç лартнă.

Калас пулать, РОНО та вулав çурчĕсемпе тата клубсен пурнăçĕпе сахал интересленет; ялсовечĕ тăрăшмасть. Нумаях пулмасть вулав çурчĕн заведующийĕ пулма ялсовет халăх хушшинче ĕçлеме пултарайман ачана, Ефимова уйăрса лартрĕ. Ун çинчен РОНО пĕлмест пулас-ха. Ефимов хăйĕн вăхăтне кунĕпех ялсоветĕнче пушă сăмахсем çапса ларса ирттерет.

А. ТУКМАКОВ.

Тракторсене çуракине вăхăтра тата отлично хатĕрлемелле

Машинно-тракторнăй парксене кирлĕ пек çуракине хатĕрлесси—вăл МТС директорĕсен, районри руководительсен, çĕрĕç органĕсен, партипе совет органĕсен паянхи боевой задачи, — çак ĕçе киепле те ырана хăварма юрамасть.

Вăрçă вăхăтĕнчи условире машинно-тракторнăй станцисен хăйсене кирлĕ материалсене, запаслă чаçсене пурне те централизованнăй снабжени шучĕпе парасса кĕтсе ларас пулмасть. Кирлĕ япаласене чылайĕшне хăйсем патĕнчех шыраса тупмалла, МТС тата республикăри промышленность предприятисен мастерскойĕсенче хатĕрлемелле.

Ишлей тата Чкаловски машинно-тракторнăй станцисен коллективĕсем тракторсене юсамалли кĕркуннехипе хĕллехи плана срокчен, 1942 çулти февралĕн 1-мĕшĕчен пурнăçланă. Тракторсем çумне кăкарса ĕçлемелли машинăсемпе инвентарьсен ремонтне тата çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли ытти ĕçсене те çав МТС-сем ăнăçлăн туса пыраççĕ. Çав машинно-тракторнăй станцисен руководителĕсем, пĕлтĕрхи йăнăшсене асăрхаса, кăçал тракторсене вăхăтра юсама тытăннă. Чи малтанах вĕсем капитальнăй ремонт тумалли тракторсене юсанă, ремонт вăхăтĕнче ĕçе тĕрĕс организациленĕ, шалти резервсемпе пуррине те туллин усă курса, тракторсене юсамалли плана срокченех пурнăçланă.

Тракторсене юсас ĕç ытти районсенчи чылай МТС-сенче те ăнăçлăн пулса пырать. Сăмахран, Пăрачкав МТС-ĕ тракторсене юсамалли плана 92,3 процент, Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕ—89,4 процент, Вăрнар МТС-ĕ — 78,2 процент, Элĕк МТС-ĕ—80,5 процент пурнăçланă.

МТС руководителĕсем ремонт ĕçне тĕрĕс йĕркеленĕ пулсан, рабочисене капиталсемех хăй вырăнне тăратнă пулсан, бригадăсем хушшинче социализмлă ăмăртăва кирлĕ пек анлăн сарса янă пулсан, ĕнтĕ ытти машинно-тракторнăй станцисем те çавсем пекех лайăх ĕçлеме пултарнă. Хăшпĕр машинно-тракторнăй станцисем тракторсене юсас ĕçре кая юлни тата çакăнтан та килет: вĕсем хăйсен шалти резервĕсемпе начар усă кураççĕ, кивĕ чаçсене çĕнетес, çĕнĕрен запаслă чаçсем туса хатĕрлес ĕç çине сиелтен пăхаççĕ. Тракторсене юсамалли плана Красноармейски МТС 33,3 процент, Çĕрпÿ МТС-ĕ — 47,8 процент, Шăмăршă МТС-ĕ—46,4 процент çеç пурнăçлани шăп çак сăлтавсенчен килнĕ те ĕнтĕ. Çав МТС-сен руководителĕсем запаслă чаçсемпе материалсене централизованнăй йĕркепе парасса кĕтсе ларнă, çав чаçсемпе материалсене хăйсем патĕнче шыраман, малта пыракан МТС-сен опычĕсене илмен.

Илес тесен, малтисен опычĕ сахал мар пулнă. Шăхасан МТС-ĕн старши механикĕ Северов юлташ токарнăй станок çинче ахаль ĕçсем кăна мар, тĕрлĕ фрезернăй ĕçсем те тăвать.

Вăрмар МТС-че У-2 трактор моторĕсен поршневой группине У-2-сен кивĕ гильзисене хăйраса, вĕсене хăйсене юрăхлă хăйранă ГАЗ машинисен кивĕ поршенĕсемпе вырнаçтарса лартса ремонт тăваççĕ. Чкаловски тата Йĕпреç МТС-сем перемычкăра çуркаланса кайнă СХТЗ моторĕн цилиндр блокĕсене ăнăçлăн юсама хăнăхса çитнĕ.

Çакнашкал тĕслĕхсем ытти МТС-сенче те нумай, анчах та кусенчен те ĕнтĕ лайăх курăнать: пирĕн МТС-че тракторсене вăхăтра юсама кирлĕ шалти резервсем калама çук пысăк. Анчах пирĕн МТС-сем çав резервпа, çав майсемпе çителĕклĕ таран усă кураймаççĕ-ха, çĕнĕ сĕнÿсем, лайăх опытсем çинчен пурте мар-ха пĕлетпĕр эпир. МТС-сем тракторсене юсас ĕçре кайра пыни пуринчен ытла кивĕ детальсене юсаса çĕнетессине, çĕнĕ детальсем хатĕрлессине япăх организацилениннчен килет. Çĕрпÿ МТС-ĕ кивĕ детальсене юсаса çĕнетмелли кварталти плана пĕтĕмпе те 5,7 процент кăна, çĕнĕ детальсем тумалли плана—10 процент кăна пурнăçланă.

Шăмăршă МТС-ĕ кивĕ детальсене юсаса çĕнетмелли плана 9,1 процент кăна пурнăçланă, Куславкка МТС-ĕ ку енĕпе плана 27 процент тултарнă, çĕнĕ детальсем тăвас ĕç кунта вара пуçланманпа пĕрех. Çак МТС-сенче, ытти МТС-сенчи пекех, станоксен оборудованийĕ начар мар, анчах та кунта çав оборудованипе япăх усă кураççĕ. Вăрнар МТС мастерскойĕ оборудовани тĕлĕшпе нихăш çинчен те малта тăмасть. Анчах апла пулин те, кунта пĕр уйăх çурă хушшинче кивĕ детальсене 12.636 тенкĕлĕх юсаса çĕнетнĕ, квартал планне 324 процент тултарнă, çав вăхăтрах 715 тенкĕлĕх çĕнĕ детальсем тунă. Е. Кувакино МТС-не илер; вăл кивĕ детальсене юсаса çĕнетмелли кварталти плана 299 процент, çĕнĕ детальсем тумалли плана—66,3 процент тултарнă.

Машинно-тракторнăй мастерскойсенчен халлĕхе Канашри мастерской та питĕ япăх ĕçлет-ха. Кунта çĕнĕ детальсем тăвас ĕçĕн планне 31 процент, киввисене юсаса çĕнетмелли плана 17,6 процент çеç пурнăçланă.

Тракторсемпе машинăсене юсас ĕçре МТС-семпе колхозсене вырăнти промышленность предприятисен тата хамăр республикăна вырнаçнă заводсен пулăшу парса пымалла, вĕсен тĕрлĕ запаслă детальсем туса памалла. Шупашкарти «Металлист» артелĕн план тăрăх машинăсен деталĕсене 13 тонна шăратса хатĕрлемелле пулнă, вăл 21 тонна хатĕрлеме обязательство илнĕ. Улатăр техникумĕ 21,8 тонна вырăнне — 29 тонна, Улатăрти ВРМ 20 тонна вырăнне—24,5 тонна детальсем хатĕрлесе пама обязательство илнĕ.

Кирлĕ чаçсемпе материалсене шыраса тупас, шалти резервсемпе усă курас ĕçре МТС-сене комсомол организацийĕсем калама çук пысăк пулăшу параççĕ, вĕсен пуçарулăхĕ пысăк. Ку çакăнтан та ĕнтĕ аван палăрать: республикăри комсомолецсемпе çамрăксем февралĕн 16-мĕш тĕлне тĕрлĕ чаçсемпе детальсем 35.080 тенкĕлĕх пухнă. Çав шутра 158 штука коленчатăй валсем, 619 клапан, 229 подшипник тата ыт. те пухнă. Анчах ку тĕлĕшпе те хăшпĕр предприятисемпе организацисенче ĕçсем çителĕклĕх мар-ха.

Трактор паркне çуракине хатĕрлессинче ремонт ĕçĕн пахалăхĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çуракине ăнăçлăн ирттересси тракторсене лайăх юсанинчен нумай килет. Тракторсене отлично юсамалла, вĕсен çуракинче пĕр чăрмавсăр, пĕр аварисĕр ĕçлемелле. Хăшпĕр МТС-сенче çакна асăрхаман, МТС руководителĕсем тракторсене мĕнле юсанине тĕплĕн тĕрĕслесе пыман, хăшпĕр чухне тата кирлĕ пек юсамасăрах тракторăн уйрăм детальсем çук пулсан та, ремонт тунă тесе йышăннă. Сăмахран, Вăрмар МТС-че тĕрĕсленĕ хыççăн—çакна асăрханă: 26-мĕш №-лĕ тракторăн, юсанăскерĕн, шатун подшипникĕсене те туса çитермен пулнă. 39-мĕш №-лĕ тракторăн магнето, карбюратор тата ытти чаçсем те пулман. 58-мĕш №-лĕ тракторăн воздухоочистителĕпе шыв трубки хуплашкасăр. Юсанă ытти чылай тракторсен те çитменлĕхсем сахалах мар, анчах та вĕсем çинчен актра пĕр сăмахпа та асăнман. Юсанă тракторсем çине бломбăсем хуман, усă сарайсенех вырнаçтарнă, вĕсене никам та сыхламасть, çавăнпа та вĕсен деталĕсене вăрлас тесен вăрласа кайма та пултараççĕ. Юсанă тракторсемпе, директивнăй органсем ирĕк памасăрах, ялхуçалăхĕпе çыхăнман ĕçсенче усă кураççĕ. Çапла тунипе тракторсене çĕнĕрен юсама та тивĕ.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çак фактсене пăхса тухрĕ, Вăрмар МТС-чи пек — тракторсене юсаса çитермесĕрех юсанă тесе, вĕсене юсас ĕç мĕнле пыни çинчен куçкĕретех суйса, тĕрĕс мар сводкăсем парас йăлана сивлерĕ. МТС директорне Кангин юлташа çав тракторсене юсас ĕçри çитменлĕхсене халех пĕтерме хушрĕ, малашне те çапла юсанă тракторсене актпа йышăннă хыççăн асăннă çитменлĕхсем пуррине палăртсан, ăна суда парса ответ тыттарасси пирки асăрхаттарчĕ.

Тракторсене юсас ĕçри асăннă çитменлĕхсем Красноармейски тата Çĕрпÿ МТС-сенче те палăрнă. Çавнашкал фактсем пулмалла мар. Вĕсем кам айăпĕпе пулаççĕ, çав çынсене суд умĕнче ответ тыттараççĕ.

Хăшпĕр МТС-сем тракторсене юсанă чухне пĕлтĕрхи йăнăшсенех тепĕр хут тăваççĕ, чи малтанах текущи ремонт тумалли тракторсене йышăнаççĕ, капитальнăй ремонта юлашки уйăхсене хăвараççĕ. Çапла туни ремонт вĕçленмелли срока тăсма тата кайран васкаса, хыпаланса ÿксе юсанипе ĕç пахалăхне япăхлатма пултарать. Малашнехи ĕçре кун пек йĕрке пулмалла мар.

Тракторсене юсанипе пĕрлех трактор çумне кăкарса ĕçлемелли машинăсемпе инвентарьсене те юсамалла, вĕсем те çуракине пур енчен те хатĕр пулмалла. Наркомзем пĕлтернĕ тăрăх, чылай МТС-сенче трактор çумне кăкарса ĕçлемелли машинăсене тата инвентарьсене юсас ĕç ăнăçлах пымасть. Улатăр МТС-ĕнче 54 плугран 11-ĕшне кăна юсанă, сеялкăсене тата юсама пуçăнман та-ха. Красноармейски МТС-че 57 плугран 8-ăшне кăна юсанă, сеялкăсене юсама пачах та тытăнман. Вăрмар, Сĕнтĕр МТС-че те ĕçсем çавнашкалах. Çĕрпÿ МТС-че вара трактор плугĕсем, сеялкăсемпе культиваторсем хăшпĕрисем колхозра юр айĕнчех выртаççĕ. Ялхуçалăх машинисемпе инвентарьсене юсассине малашне тăсса пыма юрамасть. Ку ĕçри çитменлĕхсене халех пĕтермелле.

Трактористсем валли вагон-будкăсем хатĕр пулмалла. Пулмасан çĕнĕрен тумалла, киввисене юсамалла. Вагон-будкăсене кирлĕ пек йĕркелесе тăвас пулать: унта тимĕр кăмаки те, койки те, умывальникĕ, сĕтел-тенкелĕ те тата кирлĕ ытти япаласем те пулччăр. Ку ĕçе тума государствăран укçа-тенкĕ ытла ыйтмалла та мар; колхозсем хăйсем трактористсем валли лайăх условисем тăвассишĕн тăрăшаççĕ, вĕсем хăйсем киввисене юсама, çĕнĕрен будкăсем туса, вĕсен оборудованине туянма тивĕçлĕ.

Çитес çуракин кампанийĕ—политикăллă пысăк тĕрĕслÿ пулса тăрать. Вăрçă пынă май ялхуçалăхĕ умне пысăкрах та пысăкрах задача тухса тăнине кашни МТС-ра, кашни районра тĕрĕс ăнланнине ăнланманнине çитес çураки уççăнах палăртĕ. Намăс пулĕ вара кахалсене, намăс пулĕ ÿркенсе ĕçлекенсене, намăс пулĕ çуракине вăхăтра тата тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илейменнисене. Намăс курас мар тесен, МТС директорĕсен, политотделсен тата район руководителĕсен тракторсене, ялхуçалăх машинисемпе инвентарьсене юсаса çуракине хатĕрлесе çитерессишĕн пĕтĕм вăйсене хурса кĕрешмелле. Политотделсен тракторсемпе машинăсене юсас ĕçе, уйрăмăнах ремонт пахалăхне тĕрĕслесех пырас пулать. Трактористсемпе МТС рабочийĕсем хушшинчи политикăллă-ăнлантарулă ĕçе тĕрĕс йĕркелемелле, ĕç тухăçлăхне хăпартмалла. Трактористсемпе рабочисем хушшинче ремонт ĕçне срокчен тата пысăк пахалăхпа вĕçлессишĕн пыракан социализмлă ăмăртăва сарăлăçемĕн сарса пымалла. Малта пыракансен опытне ыттисем патне çитерме тăрăшмалла.

Т. МАТВЕЕВ.

ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх отделĕн заведующийĕн заместителĕ.

Канаш районĕнчи партактивӑн пухӑвĕ

КАНАШ. («Чӑваш Коммуни» корр). Çак кунсенче партин районри активĕн пухӑвĕ пулса иртрĕ. Пуху ВКП(б) Чӑваш Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн пĕрлешӳллĕ пленумĕн итогĕсене сӳтсе-яврĕ. Çак ыйтупа ВКП(б) райком секретарĕ М. И. Репкин юлташ доклад туса парĕ.

— Пирĕн районри парти организацийĕ, — тет докладчик, — Сталин юлташ 1941 çулти ноябрĕн 6-мĕшĕнче Мускав Совечĕн ларӑвĕнче тунӑ историллĕ докладра лартнӑ задачӑсене пурнӑçа кĕртес тĕлĕшпе пысӑк ĕçсем туса ирттерчĕ. Çулпуçӑн çулӑмлӑ сӑмахĕсене ӑнлантарса панӑ хыççӑн ĕççыннисем фронт заказĕсене кӑлартуллӑн пурнӑçа кĕртессишĕн кĕрешӗве тухрĕç, вĕсен производствӑллӑ тата политикӑллӑ активлӑхĕ ӳсрĕ, Хĕрлĕ Çара пулӑшас кӑмӑлĕ хӑпарчĕ. Районри ĕççыннисем тӑван çĕршыв оборонин фондне укçан тата заем облигацийĕсем 1 миллион та 342 пин тенкĕлĕх хыврĕç, колхозсем вунпшар тонна тĕштырӑ, вуншар центнер аш-какай, пахча-çимĕç пачĕç. Мухтавлӑ фронтовиксене ӑшӑ тумтирсем парса тумлантарас, «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума укçа-тенкĕ пухас тата укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене çырӑнса илес ĕçсене ĕççыннисем пурте пекех хутшӑнчĕç. Кунсӑр пуçне районри ĕççыннисем фронта çĕнĕ çул ячĕпе тата Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнӑ ятпа 3 пин килограмм ытла тĕрлĕрен парнесем ячĕç.

Отечественнӑй аслӑ вӑрçӑ кунĕсенче пирĕн промышленность хӑйĕн ĕçне тĕпренех урӑхлатса çĕнетрĕ. Канаш районĕнчи предприятисемпе артельсем продукци туса кӑлармалли 1941 çулти плана ирттерсе тултарчĕç. Юлашки 7—8 уйӑх хушшинче вагонсем юсакан завод хӑйĕн ĕçне чылай анлӑлатрĕ. Завод коллективĕ фронт заказĕсене тĕрĕс те хӑвӑрт пурнӑçлассишĕн пĕтĕм вӑйя, пĕтĕм пултарулӑха хурса ĕçлет. Рабочисенчен тӑватçĕр çын кашни кун икшер тата ытларах норма тултарса пыраççĕ. Çапла ĕçленине пула завод 1941 çулти производство планне чылай ирттерсе тултарчĕ.

Халӑхпа Хĕрлĕ Çара кирлĕ япаласем туса кӑларас тĕлĕшпе «Красный воин», «Авангард», «Труженик» артельсем, çӳлĕ çĕлекен мастерской мухтава тивĕçлĕ ĕçлеççĕ. 1941 çулта вĕсем планран ирттерсе темиçешер пин тенкĕлĕх тавар туса кӑларчĕç. Леспромхозпа лесхоз коллективĕсем çуна, йĕлтĕр т. ыт. япаласем туса кӑлармалли плана уйӑхран уйӑха ытлашшипех тултарса пыраççĕ.

Çав вӑхӑтрах районра хӳрере çапкаланса пыракан предприятисем те пур. Спотара, типографи, МТМ, районри промысла комбиначĕ, апат-çимĕç комбиначĕ иртнĕ çулти производство планне тултарайман, халĕ те начар ĕçлесе пыраççĕ. Ку предприятисен руководителĕсем ытларах кирлĕ вӑхӑтри шухӑш-кӑмӑлсемпе пурӑнаççĕ, ĕçе хӑвӑртлатмалли çĕнĕ майсем шырассишĕн, вырӑнти материалсемпе усӑ курассишĕн сахал тӑрӑшаççĕ.

Чугунçул транспорчĕ вӑрçӑ кунĕсенче çĕршывпа фронта кирлĕ таварсемпе хĕçпӑшалсене вӑхӑтра тата пĕр аварисĕр турттарса тӑрас тĕлĕшпе хӑйĕн ĕçне чылай лайӑхлатрĕ. Малта пыракан машинистсем йывӑр тиенĕ поездсене час-часах тата пысӑк хӑвӑртлӑхпа илсе çӳреме пуçларĕç. Станци коллективĕ вагонсене тиесе ӑсатас плана ытлашшипех тултарчĕ.

Çакӑнпа пĕрлех пуху халӑхи вӑхӑтра чугунçул транспорчĕн ĕçĕнче пысӑк ситменлĕхсем пуррине те кӑтартса хӑварчĕ. Вырӑнти тата транзитнӑй вагонсене чылай чухне вӑхӑтра йышӑнса илсе вӑхӑтра ӑсатни çук. Станцире халиччен те кирлĕ пек йĕрке туса ситерейменççĕ.

Доклад тӑрӑх пренире 10 çын тухса калаçрĕ. Вĕсенчен чылайӑшĕсем ялхуçалӑх ыйтӑвĕсем çинче, колхозсен ĕçĕнчи çитĕнӳсемпе çитменлĕхсем çинче чарӑнса тӑчĕç. Район 1941 çулти ялхуçалӑх ĕçĕсене, тĕпрен илсен, ӑнӑçлӑ вĕçлерĕ. Ĕçпĕн хушса тӳлемелли законпа хавхаланнӑ колхозниксемпе колхозницӑсем иртнĕ çул ниxӑçанхи пек мар вӑйлӑ тырпул туса илчĕç. Малта пыракан колхозсенче тырпул тухӑçлӑхĕ гектар пуçне 17 центнера çитет. Иртнĕ çулта государствӑна тырпул парас обязательствӑна 35 колхоз срокчен тултарчĕ.

Анчах çапах та хӑшпĕр колхозсем авӑн çапас, государство умĕнчи парӑмсене татас тĕлĕшпе юлса пыраççĕ-ха. «Красный Октябрь», «Искра», Калинин, Тельман тата Чапаев ячĕпе тӑракан колхозсем машинно-тракторнӑй станцине ĕçпĕн халиччен те тырӑ парса татман. Чылай колхозсем государствӑна аш-какай, сӗт-кантӑр тӑратас ĕçе манса хӑвараççĕ.

Пуху районра çуракине хатĕрленес, вӑрман хатĕрлес ĕçсем ытла та сӳрĕк пынине палӑртрĕ тата вĕсене лайӑхлатас тĕлĕшпе партипе совет организацисен çитес вӑхӑтра мĕн-мĕн тумаллине кӑтартса хӑварчĕ.

Районри çарĕç комиссарĕ Макаров тата всевобуч подразделенийĕн политрукĕ Тимофеев юлташсем Хĕрлĕ Çар валли тивĕçлĕ резерв хатĕрлесси çинчен каларĕç.

— Халӑха çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе, — тет Макаров юлташ, — ку таранччен эпир чылай ĕçсем турӑмӑр. Çапах та пирĕн коммунистсен Хĕрлĕ Çар валли боевой резерв хатĕрлессипе ытларах интересленмелле.

Тухса калаçакансенчен Шевельковпа Шлапак юлташсем, ĕççыннисен пурнӑçпа йӑла условийĕсене лайӑхлатас ыйтусем çинче чарӑнса тӑрса, хулари тата вагонсем юсакан заводри столовӑйсем, магазинсем, мунчасем, больницӑсем, культура учрежденийĕсем питех те начар ĕçленине палӑртрĕç.

Районри партактивӑн пухӑвĕ хӑйĕн умне лартнӑ ыйтӑва тĕплĕн сӳтсе-яврĕ тата Сталин юлташӑн кӑлартӑвĕсене малашне пурнӑçласа пырас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене палӑртса хӑварчĕ.

Т. ИВАНОВ.

Осоавиахим организацийĕсен ĕçĕсем

Отечественнӑй аслӑ вӑрçӑ Осоавиахим организацийĕсем умне питĕ те ответлӑ тата пысӑк задачӑсем кӑларса тӑратрĕ. Вĕсенчен пĕри вӑл—«Сывлӑшран килсе тапӑнниччен сыхлама пурне те обязательнӑй йĕркепе вĕрентесси çинчен» СССР Совнаркомĕ йышӑннӑ постановленне пурнӑçласси.

Çак задачӑна пурнӑçланӑ май, Осоавиахимӑн Тӑвай районĕнчи организацийĕсем хӑйсен ĕçне вӑрçӑ вӑхӑчĕ ыйтнӑ пек урӑхлатса çĕнетрĕç. Партипе вырӑнти совет оргӑнĕсем пулӑшса пынипе, кашни колхозрах, кашни учрежденипе предприятирех кружоксем организацилесе районри ĕççыннисене 28 сехетлĕ программа тӑрӑх ПВХО ĕçне вĕрентсе кӑларнӑ.

ПВХО инструкторĕсем çителĕксĕр пулнӑ, çавӑнпа ялти интеллигенцие кӗске сроклӑ курссенчен вĕрентсе кӑларса, ĕçе яваçтарнӑ.

Халӑха сывлӑшран килсе тапӑнниччен тата химиллĕ тапӑнуран сыхланма вĕрентесси, уйрӑмӑнах, Енĕш Нӑрвал, Чӳтей, Çĕнĕ Пуянкасси, Нӑрваш Кушка, Элшус, Йӑнтӑрч колхозĕсенче авӑн пурнӑçа кĕрсе пычĕ. Енĕш Нӑрваш колхозĕнче (обществӑллӑ инструктор М. Шувалов юлташ) 28 сехетлĕ программа тӑрӑх 1.034 çынна, Чӳтей колхозĕнче (обществӑллӑ инструктор Е. Храмова юлташ)—710 çынна, Çĕнĕ Пуянкассинче (обществӑллӑ инструктор К. Семенов)—760 çынна вĕрентсе кӑларнӑ. Ку колхозсенче самозащита группиcен занятийĕсем те йĕркеллĕ пулса пыраççĕ. Осоавиахим организацине çĕнĕ членсем илесси те ӳсеех пырать.

Çапах та районри хӑшпĕр колхозсенче массӑллӑ-оборонӑллӑ ĕçе тивĕçлĕ вырӑна лартман-ха. Улянк, Ямбулат, Вӑтаял колхозĕсенче Осоавиахим организацийĕсем начар ĕçлеççĕ. Ку колхозсенче халӑха ПВХО ĕçне вĕрентессине вĕçне çитереймен. Осоавиахим членĕсемпе ĕçлесси тата çĕнĕ членсем илесси те начар пырать. Çаксем вĕсем кунти комсомол организацийĕсемпе колхоз руководителĕсем йӑваш чунлӑ пулма тата лӑпланса ларма пӑрахманни çинчен калаççĕ.

Халӑх хушшинчи массӑллӑ-оборонӑллӑ ĕçе çӳллĕ пусӑма лартмалла, кашни колхоза, кашни предприятие, учреждение оборона крепоçĕ туса хумалла.

Самозащита групписем чӑн-чӑн боевой единицӑсем пулса тӑччӑр, группӑри кашни боец тревога вӑхӑтĕнче хӑй мĕн тума тивĕçлине отлично пĕлтĕр.

Осоавиахим организацийĕсен тепĕр пысӑк задачи вӑл—пурне те çар ĕçне вĕрентнĕ çĕрте военкоматпа военно-учебнӑй пунктсене куллен пулӑшса пырасси, Хĕрлĕ Çар валли çирĕп резервсем хатĕрлесси пулса тӑрать.

Партипе совет тата комсомол организацийĕсем пулӑшса пынипе, эпир çак задачӑсене чыслӑн пурнӑçлӑпӑр, кашни колхоза, кашни учреждение предприятие оборонӑн хӑватлӑ крепоçĕ туса хурӑпӑр.

С. ГРИГОРЬЕВ.
Осоавиахим Тӑвай райсовечĕн командир-инструкторĕ.

КРАСНОАРМЕЕЦСЕН ÇЕМЬИСЕНЕ ПУЛӐШУ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Пионерсемпе шкул ачисем, комсомолецсем Сталин юлташӑн вĕрентĕвне чыслӑн пурнӑçа кĕртеççĕ. Шĕнерпуç вӑтам шкулĕнче вĕренекенсем С. Петров, Д. Иванова пур предметсемпе те отличнӑ вĕренеççĕ. Вĕсем урoксене яланах тĕплĕн хатĕрленсе пыраççĕ.

Пионерсемпе комсомолецсем Хĕрлĕ Çара кайнисен çемьисене те пулӑшаççĕ. Шĕнерпуç вӑтам шкулĕнче ку тĕлĕшпе 12 пионер ĕçлет. Р. Новикова, Л. Илларионова, В. Малова пионеркӑсем уйрӑмах тӑрӑшаççĕ, хӑйсене уйӑрса панӑ красноармеецсен çемьисене вĕсем шыв кӳрсе параççĕ, кил-çуртĕнче тасатаççĕ, канмалли кунсенче вĕсен пĕчĕк ачисене пӑхаççĕ, амӑшĕсене колхоз ĕçне тухма май параççĕ. Кун пек пионерсем шкулта татах та нумай.

В. ГРИГОРЬЕВ.

КОЛХОЗА КĔРЕÇÇĔ

ЕТĔРНЕ. Чурпай ялсоветĕнчи единоличниксем çак кунсенче колхоза кĕме тытӑнчĕç. Нумай пулмасть Чурпайри Киров ячĕпе тӑракан колхоза 13 хуçалӑх, Урапакассинчи «Правда» колхоза 2 хуçалӑх кĕчĕç. Колхоза кĕме заявлени панӑ единоличниксем татах пур.

М. ЗАХАРОВ.

„Нимĕç салтакĕсем халĕ вӑрçӑн чи йывӑр тапхӑрĕнче пурӑнаççĕ"

Гитлер хаçачĕ куççуль витĕр йышӑнни

СТАМБУЛ, мартӑн 3-мĕш. (ТАСС). «Гамбургер фремденблатт» хаçатӑн çар корреспонденчĕ çапла çырать: Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вӑрçӑ фронтĕнче «нимĕç салтакĕсем халĕ вӑрçӑн чи йывӑр тапхӑрне пурӑнса ирттереççĕ». Малалла вара куççуль витĕр корреспондент çапла çырать: «Çулла çак вӑрçа савӑнăçлӑ пит-куçпа кайнӑ салтаксен çамрӑк та тулли питçӑмартисем халĕ пĕрĕне-пĕрĕне ларнӑ. Куçшӑрçисенче тĕрлĕ йывӑрлӑхсемпе вилĕм хӑрушлӑхĕ куранса тӑрать. Вĕсем вилĕм мĕнне пĕлсе çитнĕ, вĕсем вилĕме темиçе пин тĕслине те курса тӳссе ирттернĕ. Вĕсем сывлаcса та вилĕм сывлӑшĕпе сывлаççĕ. Темиçе уйӑх ĕнтĕ вилĕм вĕсен хыççӑнах пĕр юлмасӑр çӳрет. Пирĕн салтаксем кун хыççӑн кун, çĕр хыççӑн çĕр, эрни-эрнипе пĕр улшӑнмасӑр, пĕр канмасӑр çапӑçаççĕ, хӑйсем çапах та хĕлĕн юлашки уйӑхĕсенче сывлӑш çавӑрса илсе канма пулĕ тесе шанаççĕ. Анчах вĕсен шанчӑкĕ ахалех, пурнӑçа кĕмесĕрех пĕтсе лармалли шанчӑк». Корреспондент хӑйĕн статьине çапла каласа вĕçлет: «Нимĕç салтакĕ хӑйĕн нервĕсем мĕн чухлĕ çирĕппине пĕлмелли ытла та йывӑр тĕрĕслеве тӳссе ирттерет»,—тет.

Гитлеровецсем Совет партизанĕсенчен хӑраса чĕтресе тӑраççĕ

СТОКГОЛЬМ, мартӑн 3-мĕш. (ТАСС). «Кракауэр цейтунг» хаçат Шнейдерӑн «СС» войскисенче тӑракан çар корреспонденчĕн статьине пичетлесе кӑларнӑ. Корреспондент уççӑнах çапла çырать: нимĕç войскисен тылĕнче пур çĕрте те совет партизанĕсем сиен кӳреççĕ. Корреспондент каланӑ тӑрӑх, партизансем нимĕçсен çар колоннисене тата нимĕçсене усӑ пама пултаракан пур япаласене те пĕтерсе тӑкма тӑрӑшаççĕ. Корреспондент çакӑн пек эпизод çинчен çырать: пĕрре С. вырӑнтан çурçĕр еннерехри ялта вырнаçнӑ нимĕçсен штабне, çав ялта тӑракан нимĕç салтакĕсене партизансем кунсеренех тапӑнаççĕ, вĕлереççĕ тата çав ялти нимĕçсем лартнӑ старостӑсене çака-çака вĕлерессипе хӑратаççĕ, тесе пĕлтернĕ. Çав ялти халӑхран продовольстви туртса илнĕ чухне партизансем çил-тӑвӑл пек вĕçтерсе çитнĕ те нимĕçсен икĕ салтакĕпе унтер-офицерне вĕлернĕ. Партизансене пĕтерме «СС» отрядне янӑ. Çав отряд партизансем тӑнӑ вӑрмана çавӑрса илме хӑтланнӑ. Отрядри салтаксем вӑрман хуралçин пӳртне çĕмĕрсе кĕрсе кайнӑ. Вĕсем унта партизансен отрячĕн штабĕ пулĕ тесе шутланӑ. Анчах вĕсем никама та тытайман. Партизансем вӑрманта тĕрлĕ тĕлте пытанса пĕтнĕ.

Германире ĕç вӑйĕ çитмест

ЛОНДОН, мартӑн 2-мĕш. (ТАСС). «Обсервер» хаçатӑн дипломатиллĕ обозревателĕ çапла çырать: Германире ĕç вӑйĕ çителĕклĕ марри кунран кун ытларах та ытларах палӑрса пырать. Çакна нимĕçсен çарĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вӑрçӑ фронтĕнче питĕ пысӑк çухатусем тӳснипе ӑнлантарса памалла. Çакӑн пирки те ĕнтĕ Германи командованийĕн рабочисене çара мобилизацилесе ытларах та ытларах фронта илсе кайма тивет. Кунсӑр пуçне Германире тата вӑл оккупациленĕ çĕршывсенче продовольстви запасĕсем иксĕлсе пĕтнĕ пирки тĕрлĕрен чир-чĕрсем саралнӑ. Çав чир-чĕрсем ĕнтĕ ĕç тухӑçлӑхне чылаях чакарнӑ.

Обозреватель çапла кӑтартса парать: Гитлер январĕн 30-мĕшĕнче каланӑ хӑйĕн юлашки сӑмахĕнче нимĕçсене хĕçпӑшал производствине ӳстерме çине тӑрсах чĕнни Германия ку тĕлĕшпе йывӑрлӑхсем тӳснине кӑтартса парать. Германири хаçатсем, хĕçпӑшал производствине ӳстерме пулӑшас тесе, урнӑ пек кампани пуçласа янӑ. Çитес çывӑх эрнесемпе уйӑхсем хушшинчех çар производствин хӑвӑртлӑхне ӳстерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерӑсем йышӑнмасан, халӑх питĕ пысӑк хӑрушлӑх умне тухса тӑрать, тесе хӑратаççĕ нимĕç хаçачĕсем.

Риомри процесс

ЖЕНЕВА, мартӑн 1-мĕш. (ТАСС). Свидетель генерал Жорж çапла кӑтартса панӑ: Францин ытла çӳлех мар перекен зенитнӑй артиллери пачах та пулман, тенĕ. Даладье çак айӑпа хӑй çинчен сирсе ярса çапла каланӑ: чӑнах та, Францире сывлӑшран тапӑнассине хирĕç вӑйлӑ оборона тӑвас тĕлĕшпе нумайччен нимĕн те хатĕрленмен. Анчах ку вӑл çар çыннисем Даладье шухӑшĕпе килĕшменрен пулнӑ. Çар çыннисем самолетсене хирĕç самолетсем кӑна çапӑçма пултараççĕ тесе ĕненетернĕ. 1938 çулта Даладье ытла çӳлех мар перекен зенитнӑй орудисем тата 25 миллиметрлӑ тупӑсем тума хушнӑ. Вара Германия Франци çĕршывĕ çине кĕрсе кайма тытӑннӑ вӑхӑт тĕлне Францин пĕчĕк калибрлӑ зенитнӑй орудисем 3.500 пулнӑ. 90 миллиметрлӑ зенитнӑй орудисем пулман. Малалла Даладье çапла каланӑ: Франция поражени тӳсни оборона линийĕсем тӑрӑх çар вӑйĕсене тĕрĕс мар валеçсе тухнинчен нумай килчĕ, тенĕ. Мажино линийĕ хыçне 20 дивизи пухса тӑратнӑ тенинчен Даладье тĕлĕнсех кайнӑ.

Суд председателĕ айӑпланакансене Франци пораженийĕшĕн Францин çар çыннисем айӑплӑ пулнине кӑтартма тӑрсанах чарса лартать, пуринчен ытла суд председателĕ айӑпланакансем Франци пораженийĕшĕн Петэн хӑй айӑплине кӑтартма тӑрсан питех те хаярланса калать, айӑпланакансене пӳлсе лартать. Çапах та Петэн Франци пораженийĕшĕн питех те айӑплӑ пулса тӑни айӑпланакансем каласа панинчен лайӑх палӑрса тухнӑ, ӑна халь халӑх та пĕлсе çитнĕ. Вишири правительство кун пирки шикленсе ӳкнĕ. Францин çак вӑрçӑри пораженийĕшĕн Францин халӑхĕ вӑхӑтра Германипе çыхӑнса тӑракан çар çыннисем нумайӑшĕ питех те айӑплӑ. Çакӑ вӑл Германин правительство çыннисене пĕрре те канӑç памасть. Пуринчен ытла вĕсене Даладье юлашкинчен тухса калани тарӑхтарать. Даладье хӑйĕн юлашки сӑмахĕнче Франция вӑрçӑра поражени тӳснĕшĕн Петэн айӑплӑ пулнине кӑтартса панӑ. Германи информаци бюровĕ Даладьене хирĕç уйрӑм пĕлтерӳ кӑларнӑ. Анчах та Германи информаци бюровĕ Даладье кӑтартса панӑ фактсемпе цифрӑсене пӑрахӑçа кӑларас тĕлĕшпе нимĕн те калаймасть, мĕншĕн тесен вĕсем тĕрĕсси пуриншĕн те курӑнсах тӑрать. Вара Германи информаци бюровĕ çапла каласа хурать: «Риомри судӑн Даладьене Францин вӑрçӑри пораженийĕшĕн Францин ĕлĕкхи генеральнӑй штабĕ айӑплӑ пулнине кӑтартма ирĕк памалла мар», тет.

ЛОНДОН, мартӑн 2-мĕш. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: Даладье Риомри процесри хӑйĕн юлашки сӑмахĕнче Францин çурçĕрти чикки хӳтĕлĕхсĕр пулнӑшӑн пĕтĕмĕшпех Петэн айӑплине лайӑх кӑтартса панӑ. Францин высши çар советне Даладье сĕнӳ тӑратнӑ пулнӑ. Çав сĕнӳ тӑрӑх, Францин çурçĕрти чиккине Мажино линийĕ пĕтнĕ тĕлти Лонгвирен пуçласа тинĕсе çитиччен оборона тĕлĕшпе çирĕплетмелле пулнӑ. Анчах Петэн çакна хирĕç ытла та хытӑ тӑнӑ пирки çав сĕнĕве высши çар совечĕ йышӑнман. 1934 çулта Петэн хӑйĕн уйрӑм меморандумĕпе Седана хӳтĕлеме кирлине пӑрахӑçа кӑлартарнӑ. Вӑл çакӑн пек кулӑшла «аргументсем» кӑларса тӑратнӑ: противник çарĕ чӑтлӑх вӑрмансем урлӑ каçса тухма пултараймасть, ун пек вӑрмансем вĕсем «хӑйсем тĕллĕнех çирĕп оборона» пулса тӑраççĕ, тенĕ.

ЖЕНЕВА, мартӑн 2-мĕш. (ТАСС). Риомри процесра Даладьепе Блюм тухса каланисенчен тата защитниксен сӑмахĕсенчен çакӑ лайӑх курӑнса тӑрать:

Бельгиецсем Гитлерӑн „çĕнĕ йĕркине" кураймаççĕ

Нимĕçсен хаçачĕ йышӑнни

СТОКГОЛЬМ, мартӑн 2-мĕш. (ТАСС). Гитлерла хаçат «Брюселер цейтунг» Бельги халӑхĕ нимĕç оккупанчĕсем çине кураймасӑр пӑхни çинчен статья пичетлесе кӑларнӑ. «Бельгири рабочисемпе служащисен анлӑ массисем çав тери йывӑр условисенче пурӑнаççĕ, — тесе уççӑнах çырать хаçат. — Оккупаци мĕн чухлĕ ытларах тытӑнса тӑрĕ, çавӑн чухлĕ нумайрах халӑх пурнӑçа йĕркелеме ытларах ĕмĕтленĕ». Нимĕçсене Бельгирен хӑваласа кӑларса ярассине çĕршыври мĕнпур халӑх кĕтни çинчен хаçат уççӑнах çырать.

«Оккупациленĕ пур çĕршывсенче те, çавнашкалах Бельгире те, — тесе çырать «Брюселер цейтунг» хаçат, — темĕн чухлĕ çынсем çак ĕмĕте хӑйсен политикин тĕп принципĕ туса хунӑ».

Хаçат çав çынсем пурте гитлерла «çĕнĕ Европӑн» противникĕсем пулса тӑраççĕ тесе палӑртса, вĕсене хаяррӑн хӑратса çырать.

Вӑхӑтлӑха йышӑннӑ совет районĕсенче гитлеровецсем ирĕксĕр ĕç йĕрки тӑваççĕ

СОФИЯ, февралĕн 27-мĕш. (ТАСС). Кунти хаçатсенче Гавас-ОФИ агентствин пĕлтерĕвне пичетленĕ. Çав пĕлтерӳре çапла каланӑ: Волыньри, Подолири тата Киев облаçĕнчи ялхуçалӑх рабочийĕсене 400 пин çынна нимĕçсем хӑйсем оккупациленĕ ытти районсене ирĕксĕр ĕçлеттерме куçарса каяççĕ.

Гейдрихӑн тискерле çĕнĕ приказĕ

ЛОНДОН, мартӑн 4-мĕш. (ТАСС). Лондонра пурӑнакан чех çыннисем каланӑ тӑрӑх, «Чехипе Моравин протекторĕ» Гейдрих «протекторатра» пурӑнакан пур еврейсене те вӑтам ĕмĕрти Терезин ятлӑ паллӑ тĕрмене хупма приказ панӑ. 90.000 еврее яхӑн крепость стени ӑшĕнчи нӳрĕ подвалсене хупса лартаççĕ.

Лӑпкӑ океан çинчи вӑрçӑ

АМЕРИКА ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, мартӑн 3-мĕш. (ТАСС). Америкӑри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министерстви кӑларнӑ коммюникере кӑтартса панӑ тӑрӑх, Батаан çурутравĕ çинче (Филиппинра) юлашки 24 сехет хушшинче çĕр çинче нимĕнле операцисем те пулса иртмен.

АНГЛИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, мартӑн 3-мĕш. (ТАСС). Англин Бирмӑри командованийĕ кӑларнӑ коммюникере кӑтартса панӑ тӑрӑх, Ситтанга юханшывĕ çинче Англи бомбардировщикĕсем Японии войскисен позицийĕсене ӑнӑçлӑн атакӑланӑ.

Австрали командованийĕ кӑларнӑ коммюникере кӑтартса панӑ тӑрӑх, мартӑн 3-мĕшĕнче Японии самолечĕсем çурçĕр Австралире Брум тата Бердам хулисене атакӑланӑ. Бердам хули çине пулеметсемпе тупӑсенчен пенĕ. Икĕ хулинче те çурт-йĕрсене кӑштах сиенленĕ. Вилнисемпе аманнисем çук.

ГОЛЛАНДИ ИНДИЙĔН КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИСЕМ

БАТАВИЯ, мартӑн 3-мĕш. (ТАСС). Голланди Индийĕн командовани кӑларнӑ коммюникере пĕлтернĕ тӑрӑх, Ява утравĕ çинче противник ӑнӑçлӑ ĕçсем тӑвайман, вӑл мартӑн 1-мĕшĕнче йышӑннӑ позицисенчен малалла куçма пултарайман. Голланди Индийĕн бомбардировщикĕсем Ява утравĕн çыранĕ çывӑхĕнче Японии суднисем çине бомбӑсем пӑрахнӑ. 10.000 тата 8.000 тонна водоизмещениллĕ икĕ транспорт çине бомбӑсем тĕл ӳкнине палӑртнӑ. Пĕр бомби вĕççе хӑпарма хатĕрленекен вăçĕ гидросамолет хушшине ӳкнĕ. Вĕсенчен икĕ гидросамолечĕ пĕтнĕ. Голланди Индийĕн подводнӑй лодки Ява утравĕн çыранĕ çывӑхĕнче Японин танкерне путарнӑ.

ЯПОНИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ.

ТОКИО, мартӑн 3-мĕш. (ТАСС). Официальнӑй сведенисем тӑрӑх, Японин Ява утравĕ çинче çапӑçакан войскисен малти чаçĕсем Бандунг çывӑхĕнчи пункт патне çитнĕ.

Японипе Китай вӑрçи

Мартӑн 1-мĕшĕнче Японии войскисем Вӑтаçĕр Китайри Чжецзян провинцинче (Тян-шань бухтин хĕвелтухăç енчи çыранĕнче) анса юлма хӑтланса пӑхнӑ, анчах та вĕсен çав ĕçĕ ӑнӑçлӑ пулман. Японецсен каялла каракансем çине тапранма тивнĕ. Çурçĕр Китайра çапӑçусем Суйюань провинцин Хĕвеланӑç енче пыраççĕ.

Японин тинĕс-çар флочĕпе суту-илӳ флочĕ Лӑпкӑ океанра тунӑ çухатусем

НЬЮ-ЙОРК, мартӑн 1-мĕш. (ТАСС). Тинĕс министерстви Японин тинĕс-çар флочĕпе суту-илӳ флочĕ 1941 çулти декабрĕн 10-мĕшĕпе 1942 çулти февралĕн 24-мĕш хушшинче тунӑ çухатусем çинчен сведенисем пичетлесе кӑларнӑ. Çав сведенисем тӑрӑх, Америкӑри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тинĕс-çар вӑйĕсем çӳлерех асӑннӑ вӑхӑт хушшинче японецсенне 1 авианосец, 2 крейсер, 7 эсминец, 3 подводнӑй лодка, 1 миннӑй тральщик, 3 танкер, 13 транспорт, 16 грузовой судно тата тĕрлĕ йышши 6 судно путарнӑ; кунсӑр пуçне 1 авианосец, 1 эсминец, 1 гидроавиатендер, 2 транспорт, тĕрлĕ йышши 2 судно путарнӑ пулмалла; японецсенне «Конго» класĕнчи 1 линкора, 1 подводнӑй лодкӑна тата тĕрлĕ йышши 3 суднӑна сиенленĕ.

Японипе Америка хушшинче вӑрçӑ пуçланиччен Японин суту-илӳ флотĕнче чи лайӑх суднӑсем «Ямата» класĕнчи 17-шер пин тонна водоизмещениллĕ 3 судно пулнӑ. Çав суднӑсенчен пĕринчен авианосец тунӑ пулнӑ. Америкӑри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тинĕс-çар вӑйĕсем «Ямата» класĕнчи 1 суту-илӳ суднипе 1 авианосеца путарнӑ.

Америкӑри çар министерстви Японин флочĕ 1941 çулти декабрĕн 7-мĕшĕпе 1942 çулти февралĕн 26-мĕш хушшинче тунӑ çухатусем çинчен сведенисем пичетлесе кӑларнӑ. Çав сведенисем тӑрӑх, Америкӑри Пĕрлешӳллĕ Штатсен авиацийĕ çӳлерех асӑннӑ вӑхӑт хушшинче японецсен 1 линкорне, 13 крейсерне, 2 эсминецне, 14 транспортне, 1 авианосецне питĕ пысӑк сиен кӳнĕ; 1 линкорне, 1 крейсерне, 3 эсминецне, 3 танкерне, 11 транспортне, 1 подводнӑй лодкине путарнӑ пулмалла.

Америка авиацийĕпе зенитнӑй артиллерийĕ японецсен 245 самолетне персе ӳкернĕ; кунсӑр пуçне темиçе самолета сиен кӳнĕ. Çак вӑхӑт хушшинчех японецсем Америкӑн 48 самолетне çеç персе ӳкернĕ. Америкӑн Китай çарĕпе пĕрле кĕрешекен доброволец летчикĕсем Японин 165 самолетне персе ӳкернĕ, хӑйсем 31 самолет çухатнӑ.

Çар министерстви çапла кӑтартса парать: «путарнӑ пулмалла» тенисен шутне питĕ пысӑк сиен кӳнĕ суднӑсене çеç кĕртнĕ, мĕншĕн тесен вĕсем, хӑйсен сиенне кура, шыв çинче урӑх тытӑнса тӑма пултарайман. Сиенленнисен шутне снарядсем тĕл пырса тивнĕ суднӑсемпе транспортсене çеç кĕртнĕ.

Гитлеровецсем оккупациленĕ çĕршывсенчи выçлӑх

ЛОНДОН, мартӑн 2-мĕш. (ТАСС). Анатолийски агентствӑн Лондонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тӑрӑх, союзлӑ правительствӑсен представителĕсем Лондонра гитлеровецсем оккупациленĕ çĕршывсенчи лару-тӑру çинчен тулли информаци пухнӑ.

Францире, ӑна нимĕçсем оккупациленччен, çимелли продуктсен производстви питех те вӑйлӑ пулнӑ. Анчах халĕ хулари халӑх выçӑпа вилсе пĕтесси патне çитнĕ. Çӑкӑр илмелли нормӑна çынна кирлĕ виçен 3 пайĕнчен 2 пайне чакарнӑ. Анчах норма тӑрӑх илмелли çӑкӑра та тупса илме питĕ хĕн. Сĕт ачасем валли те çитмест. Француэсен паллӑ врачĕ Безансон çакна асӑрхаттарать: Парижра 9 çултан кĕçĕн ачасем халĕ 29 процент ытларах вилеççĕ. 16 çултан пуçласа 20 çула çитичченхи çамрӑксем ытла та начарланса кайнӑ. Француэсем тĕрĕссипех шикленеççĕ, çамрӑксем ун пек сывмарланса çитни француэсен нацийĕшĕн пысӑк хӑрушлӑх пулса тӑрать, теççĕ.

Грецире продовольстви таварĕсене сутас тĕлĕшпе нимĕнле норма та çук, мĕншĕн тесен продовольстви пĕтĕмĕшпех оккупантсен войскисене тӑрантарма каять. Грецире норма тӑрӑх, кунне пĕр-ик унци (унци — 28,3 грамм) çӑкӑр памалла. Анчах Афинӑра час-часах çуршар уйӑх хушши çӑкӑр пачах та тупса илме çук. Сентябрь уйӑхĕнче Афинӑра выçӑпа кашни кун 25-шер çын вилнĕ. Ноябрь уйӑхĕнче выçӑпа кунсерен 450 çын вилнĕ. Грецири рабочисем çĕршер пин çын начарланса çитнипе ĕçе тухма пултараймаççĕ.

Польшӑра вӑрçӑччен майракаллӑ шултра выльӑх 10,5 миллион пуç, сурӑх 3,5 миллион пуç, сысна 7,5 миллион пуç усранӑ. Ун чухне Польша тĕштырӑ та, çĕрулми те ютçĕршывсене сутса тӑнӑ. Халĕ Польшӑри халӑх çурма выçӑ пурӑнать. Мĕнпур выльӑх-чĕрлĕхе, тырра Германие илсе кайнӑ, юлашкине Польшӑри нимĕç оккупанчĕсене парса тӑраççĕ.

Бельгире кушаксемпе йытӑсене çиеççĕ. Кунта кушаксене 100—200 франка сутаççĕ, çур килограмм йытӑ какайĕ 50 франк тӑрать. Ачасем питĕ нумай вилеççĕ. Больницӑсенче выçӑпа чирлекенсен шучĕ йышланса пынине палӑртаççĕ.

Голландире голландецсене паракан продуктсен нормин оккупантсен салтакĕсене паракан нормӑран нумай катӑк. Пусакан выльӑха пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех Германие ярса тӑраççĕ.

Норвегире оккупантсен войскисем валли уйрӑм магазинсем пур, унта вĕсем хӑйсене кирлĕ продуктсене тупса илеççĕ, анчах норвежецсем выçӑхса пурӑнаççĕ.

Румынин шалти заемĕ путланса ларнӑ

ЖЕНЕВА, февралĕн 28-мĕш. (ТАСС). «Нейхе Цюрхер цейтунг» хаçат пĕлтернĕ тӑрӑх, Румынире шалти заем мĕн чухлĕ саралнине пĕлтерекен сведенисене пичетлесе кӑларнӑ. Заем ытла та начар саралнӑ. 13 облаçре Румыни влаçĕсем малтан паллӑ туса хунӑ шутран виççĕмĕш пайне те сарайман. Правительство ку заема халӑхӑн пуян синĕсем вӑйлӑн илĕç тесе шутланӑ. Анчах ун пек шанни ахалех пулнӑ, тесе çырать хаçат. Тĕрлĕрен мерӑсем йышӑнса тата хӑратса пӑхнӑ пулин те, заема пуянсем те илмен. Çапла Румынин ку заемĕ пĕтĕмĕшпех путланса ларнӑ.

Çĕнĕ кĕнекесем

Чӑвашсен Государство Издательстви кĕçĕн çултипе вӑтам çулти ачасем валли çакӑн пек кĕнекесем кӑларчĕ:

Арк. Гайдар. — Тимур тата унӑн команди. Чӑвашгосиздат, 1942 çул, 60 стр., хакĕ 2 тенкĕ.

Асӑннӑ кĕнекере подполковник Александров ывӑлĕ Тимур, хӑйĕн юлташĕсемпе пĕрле, красноармеецсен çемьисене тĕрлĕ ĕçсем туса парса пулӑшни çинчен çырнӑ. Кĕнекене çӑмӑл тата ӑнланмалла чĕлхепе çырнӑ.

А. Зуев. — Вилĕм утравĕ. Чӑвашгосиздат, 1942 çул, 40 стр., хакĕ 75 пус.

1918-мĕш çулти августӑн 2-мĕшĕнче интервентсем Архангельск хулине тытса илнĕ. Хулари большевиксене вĕсем Шурӑ тинĕсри Мудьюк утравĕ çине илсе кайнӑ. Унта вĕсене çав тери асаплантарса усранӑ. Асӑннӑ кĕнекере автор çав большевиксен паттӑр ĕçĕсемпе пурнӑçĕсем çинчен кĕскен çырать.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЦЕНТРОЭЛЕКТРОМОНТАЖУ
ТРЕБУЮТСЯ:
электромонтеры для работы по электромонтажу, электромонтеры-линейщики всех разрядов.
Принимаются также
ученики электромонтеров.
Одинокие обеспечиваются общежитием.
Обращаться: Чебоксары, Чувашская 66, поселок Водосвет, «Центроэлектромонтаж».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандӑпа парти пурнӑç пайĕн — 5—31, ялхуçалӑх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналӑн тата комсомол пурнӑç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 1905 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 п: л: